Респ... библиот... им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Июль 22 юнкун
№ 142 (9051)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Тырпула вăхăтра пухса кĕртме мĕнпур машинăсемпе тата ĕç вăйĕпе туллин усă курар (1 стр.).
РЕСПУБЛИКĂРИ ХУЛАСЕМПЕ РАЙОН ЦЕНТРĔСЕНЧЕ. Красноармейски (1 стр.).
МАРКСИЗМ-ЛЕНИНИЗМ ТЕОРИНЕ ВĔРЕНЕКЕНСЕНЕ ПУЛĂШМА. М. Григорьев. — Социализм вăхăтĕнчи таварлă производство тата хаклăх законĕ (2 стр.).
Совет Союзĕпе Израиль хушшинче çĕнĕрен дипломатилле çыхăнусем тытмалла тунă (3 стр.).
Д. Данилов.—Польша халăхĕн аслă праçникĕ (3 стр.).
Н. Гридасов.—Вагонсен çаврăнăшне хăвăртлатасси çинчен (3 стр.).
Ф. Малышкин, В. Чернов.—Артель Уставне сĕмсĕррĕн пăсаççĕ (3 стр.).
ВРАЧ КАНАШĔСЕМ. М. Сергеева.—Пĕчĕк ачасене вар-хырăм чирĕсенчен мĕнле сыхламалла (4 стр.).
Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх çирĕпленет (4 стр.).
Пĕтĕм Индири мир совечĕн сессийĕ (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Комсомолăн пуçламăш организацийĕсем

Коммунистсен партийĕ совет çамрăкĕсене воспитани парассишĕн, вĕсене социализмла Тăван çĕршывăн патриочĕсем пулма вĕрентсе ÿстерессишĕн куллен тимлĕн тăрăшать. Комсомол организацийĕсем хуçалăхпа культура строительствин пысăк задачисене татса парас ĕçре парти организацийĕсене активлăн пулăшаççĕ.

«ВЛКСМ,—тенĕ КПСС Уставĕнче,—пĕтĕм государство тата хуçалăх строительствинче партин активлă помощникĕ пулса тăрать. Комсомол организацийĕсем социализм строительствин пур участокĕсенче те, уйрăмах партин пуçламăш организацийĕсем çук çĕрте, парти директивисене ĕçре активлăн пурнăçа кĕртсе пыракансем пулмалла».

Парти Уставĕ хушнине пурнăçлас тесен, комсомол райкомĕсемпе хула комитечĕсен пуçламăш организацисем çине таянса ĕçлемелле. Комсомолăн пуçламăш организацийĕсене пур майсемпе те тĕреклетсе пыни комсомолăн мĕнпур ĕçĕсене партин XIX-мĕш съезчĕ лартнă задачăсен çÿлĕшне çĕклемелли паха услови пулса тăрать.

Комсомол ĕçĕн ăнăçлăхĕ, пуринчен ытла, пуçламăш организацисем çамрăксене парти директивисене пурнăçлассишĕн кĕрешме пултаруллăн мобилизацилесе пынинчен килет. Комсомолăн кашни пуçламăш организацийĕн предприяти, колхоз, МТС ĕçне лайăхлатас ыйтусене тивĕçлĕ парторганизаци умне лартас тĕлĕшпе анлă пуçарулăх кăтартмалла.

Пирĕн республикăра хальхи вăхăтра комсомолăн пуçламăш организацийĕсем 2.489 шутланаççĕ. Вĕсем 77.639 комсомолеца пĕрлештерсе тăраççĕ. Ку вăл — пысăк вăй. Çак хастарлă çамрăксен вăйне коммунизм строительствин задачисене пурнăçлас ĕçе мобилизацилесси—партипе комсомол организацийĕсен тивĕçĕ.

Партин чылай райкомĕсемпе хула комитечĕсем тата пуçламăш организацийĕсем комсомол организацийĕсене куллен ертсе пыраççĕ. КПСС Красноармейски райкомĕ юлашки вăхăтра комсомол организацийĕсен ĕçĕпе ытларах интересленме тытăнчĕ. Парти организацийĕсем комсомол организацийĕсене мĕнле ертсе пыни çинчен райком бюровĕнче час-часах сÿтсе яваççĕ, вырăна тухса пулăшу параççине те чылай лайăхлатнă. Çакă вăл районти комсомол организацийĕсен ĕçне вăйлатма, вĕсен рольне ÿстерме май парчĕ. Комсомолецсем ялхуçалăхĕнчи тĕп задачăна татса парас тĕлĕшпе парти организацийĕсене пысăк пулăшу параççĕ. Çамрăксем хушшинчи воспитани ĕçне лайăхлатнă май, юлашки 5 уйăх хушшинче 94 çамрăк колхозника комсомола илнĕ.

Çав вăхăтрах комсомол организацийĕсене çирĕплетес тĕлĕшпе партин хăшпĕр организацийĕсем кирлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха. Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Улатăр районĕсенчи комсомол организацийĕсем хăйсен ĕçне çителĕксĕр туса пыраççĕ, парти директивисене пурнăçлассишĕн кирлĕ пек кĕрешмеççĕ. Апла пулин те, парти организацийĕсем çав çитменлĕхсемпе килĕшсе пурăнаççĕ. Кувакино районĕнчи нумай колхозсенче, комсомол организацийĕсен йышĕ сахал. ВЛКСМ райкомĕ çамрăксем хушшинчи воспитани ĕçне япăхтарса янă, вăл пуçламăш организацисене куллен ертсе пырас вырăнне тĕрлĕ ларусемпе канашлусем ирттернипех лăпланса пурăнать. Ку районти пуçламăш организацисенчен çурри кăçалхи пилĕк уйăх хушшинче комсомола пĕр çын та илмен. Комсомол организацийĕсем çамрăксенчен уйрăлса кайнă. Вĕсем парти организацийĕсене хуçалăхпа политика задачисене татса парас ĕçре тивĕçлĕ пулăшу памаççĕ. ВЛКСМ райкомĕ пуçламăш организацисен секретарĕсене сахал вĕрентет. Чылай пуçламăш организацисенче комсомол групписем хут çинче çеç шутланаççĕ.

Комсомол организацийĕсен ĕçĕнчи çак пысăк çитменлĕхсемшĕн партин Кувакино райкомĕ те айăплă. КПСС райкомĕ комсомол организацийĕсен отчечĕсене итлекеленипех лăпланать. Парти райкомĕн секретарĕсем комсомол организаци секретарĕсен канашлăвĕсемпе семинарĕсенче пулмаççĕ, ВЛКСМ райкомне сахал пулăшаççĕ.

КПСС Первомайски райкомне комсомол райкомĕн аппаратĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсем тахçанах паллă пулнă. ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ пулнă Скворцова юлташ ĕçе япăхтарса янă, хăйне йăлара тивĕçсĕр тыткаланă. Парти райкомĕ, çак çитменлĕхсем çинчен пĕлнĕ пулин те, нимĕнле мера та йышăнман.

Çак тĕслĕхсем вĕсем партин хăшпĕр организацийĕсем комсомол организацийĕсен пĕлтерĕшне тивĕçлипе хакламанни çинчен калаççĕ.

Хальхи вăхăтра республикăри комсомол организацийĕсем умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Вĕсен комсомолецсемпе çамрăксен пĕтĕм вăйне ялхуçалăхĕнчи тĕп задачăна пурнăçлама, тăванла виçĕ республика хушшинче пыракан социализмла ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешме мобилизацилемелле.

Колхозсен анлă уй-хирĕсенче хĕрÿллĕ ĕçсем пуçланчĕç. Ăнса пулнă тырпула вăхăтра тата тăккаламасăр пухса кĕртмелле, государствăна тырă памалли плана срокчен тултармалла. Çак задачăна ăнăçлăн татса парас ĕçе активлăн хутшăнасси—республикăри комсомол организацийĕсен хисеплĕ тивĕçĕ.

Коммунистсен партийĕ çапла вĕрентет: комсомол ĕçĕнчи ăнăçлăх парти организацийĕсем ертсе пынинче пулать. Çакна асра тытса, парти организацийĕсен комсомол организацийĕсене ертсе пырас ĕçе татăклăнах лайăхлатмалла. Комсомол организацийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсемпе килĕшсе пурăннине пĕтермелле.

Комсомолецсемпе çамрăксене воспитани парас ĕçсене пĕрре те манăçа хăвармалла мар. Комсомол организацийĕсен çамрăксемпе çыхăнса ĕçлессине вăйлатма кирлине яланах асра тытмалла. Коммунистсен партийĕ комсомол йышне ÿстерессипе пиртĕ тимлĕ пăхать, çакна çамрăксемпе çыхăнса ĕçленин результачĕ тесе хаклать. Çавăнпа та комсомол йышне уйăхран уйăха ÿстермелле туни кирлĕ.

ВЛКСМ обкомĕн нумай пулмасть пулса иртнĕ пленумĕ, комсомол организацийĕсен ĕçĕнчи пысăк ыйтусене сÿтсе явса, тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ. Пленум комсомол организацийĕсене çамрăк рабочисемпе ялти çамрăксен пĕтĕмĕшле пĕлÿ илмелли шкулĕсен ĕçне лайăхлатма, çавăн пекех тата социализмла ăмăртăва ертсе пырассине вăйлатма хушса хăварчĕ.

Пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план заданийĕсене пурнăçлассишĕн пыракан социализмла ăмăртăва хутшăнасси комсомол организацийĕсен тĕп задачи пулать, тесе палăртрĕ пленум. Пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана срокчен пурнăçлассишĕн çине тăрса кĕрешни вăл коммунизм строительствин планне пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешни пулать. Совет халăхĕн малта пыракан отрячĕпе пĕрле—коммунистсемпе пĕрле—коммунизм строительствине активлă хутшăнассинчен хисеплĕрех задача комсомолецсемшĕн урăх çук.

Комсомолăн пуçламăш организацийĕсене çирĕплетсе, вĕсен рольне ÿстерсе пымалла. Комсомолăн кашни организацине парторганизацин шанчăклă помощникĕ туса хума тăрăшмалла.

Тырпула вăхăтра пухса кĕртме мĕнпур машинăсемпе тата ĕç вăйĕпе туллин усă курар

Ыраш выраççĕ

ЭЛĔК, июлĕн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). «Динамо» колхозра кĕрхи тырăсене кĕске срокра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртессишĕн социализмла ăмăрту анлă саралнă. Уй-хир бригадисем пурте ыраш вырма тытăннă. Паян хире жнейкăсем илсе тухрĕç.

«Правда» колхоз членĕсем те паян кĕрхи тырăсене вырма тытăнчĕç.

С. ИЛЬИН.

ВĂРМАР, июлĕн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). «Гвардеец», «Маяк» ялхуçалăх артелĕсем иккĕмĕш кун ыраш выраççĕ. Паян «Большевик» тата ытти колхозсенче те тырă вырма пуçларĕç.

М. ИВАНОВ.

ЧУРАЧĂК. Районти чылай колхозсенче июлĕн 20-мĕшĕнче кĕрхи тырăсене вырма тухрĕç. «Прожектор», Калинин ячĕпе тăракан тата ытти ялхуçалăх артелĕсенче те мĕнпур лаптăк çинче пулса çитессе кĕтсе тăмасăр уй-хир бригадисем ыраша суйласа вырма тытăнчĕç.

А. АФАНАСЬЕВ.

ПЕРВОМАЙСКИ, июлĕн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). Паян «Путь социализма» ялхуçалăх артель членĕсем ыраш вырма массăллăн тухрĕç. Бригадăсем пĕр-пĕринпе социализмла ăмăртса ĕçлеççĕ. Уйра ĕçлекенсем валли столовăй уçнă.

Районти ытти колхозсен уй-хирĕсенче те хĕрÿллĕ ĕç пуçланчĕ. Паян-ыран пысăк лаптăксем çинчи тырра комбайнсемпе вырма тытăнаççĕ.

А. ТУКМАКОВ.

Тырă вырма тухрĕç, анчах машинăсем хатĕр мар

ОКТЯБРЬСКИ, июлĕн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). «Новая жизнь» колхоз тырпула кĕске срокра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме тĕплĕн хатĕрленмен. Ĕнер уй-хир бригадисем ыраш вырма тытăнчĕç. Малтанхи кунах ĕçре пысăк çитменлĕхсем палăрчĕç.

Бригадăсенче ĕçе начар организаленĕ. Тăваттăмĕш бригадăра тырă вырма 50 колхозник, виççĕмĕш бригадăра вара (бригадирĕ Семенов) 10 колхозник кăна тухнă. Утмăл çын пĕр кун хушшинче çурлапа мĕн пурĕ те икĕ гектар кăна тырă вырнă.

Колхозра 5 жнейка, вĕсене пĕрне те юсаман. МТС колхоза самоходнăй комбайн илсе пынă, анчах та унпа ĕçлеме халĕ те комбайнер уйăрман.

В. ТРОФИМОВ.

Ăмăртакан районсенче

(Июлĕн 20-мĕшĕ тĕлне)

Первомайски		Шăмăршă
75,7	Утă çулнă (планпа пăхнинчен процентпа)	63,2
58,6	Капана хывнă (çулнинчен процентпа)	60,2
16,2	Силос хывнă (планпа пăхнинчен процентпа)	5,3

Выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе çак районсенчи колхозсем япăх ĕçлеççĕ. Шăмăршă районĕнче силос хывассине хакламаççĕ.

Кĕрхи тырăсем хыççăн выльăх апачĕ ытларах акса тăвар

Эпир кунта пĕр ыйту—кĕрхи тырăсене пухса илнĕ хыççăн хăмăл сухаласа выльăх апачĕ акса тăвасси çинче чарăнса тăрасшăн. Çав майпа усă курни çĕр лаптăкне ÿстермесĕрех выльăх апачĕ чылай хатĕрлеме пулăшать.

Кĕрхи тырăсем хыççăн выльăх апачĕ тумалли культурăсем акма пирĕн республикăри колхозсене кăçал государство план панă. Колхозсенче халех ĕнтĕ, пĕр тăхтаса тăмасăр мĕнле культурăсем акмаллине палăртмалла, ака ĕçĕсене вăхăтра туса ирттерме мĕн кирлине йăлтах хатĕрлесе çитермелле.

Ырашпа кĕрхи тулă хыççăн выльăх апачĕ акса тума хăвăрт пулса çитекен, пысăк тухăç паракан культурăсем суйласа илмелле. Çавсен шутне тĕрлĕ ÿсентăрансене, чи малтан, симĕсле çулса çитерекен тата силос тума каякан ÿсентăрансене кĕртме пулать. Пирĕн республика условийĕсенче çавăн пек ÿсентăрансен шутне викăпа сĕлĕ хутăшĕ, пăрçа, шурă горчица, турнепс, судан курăкĕ, вир, сĕлĕ кĕреççĕ.

Кĕрхи тырăсем хыççăн выльăх апачĕ акса тăвасси республикăри колхозсемшĕн халлĕхе агротехникăлла çĕнĕ ĕç шутланать-ха. Çавăнпа та вĕсен агротехники çине уйрăмах тимлĕн пăхни кирлĕ.

Ÿсентăрансене акса тума тăпрана лайăх хатĕрлемелле. Ăна кĕрхи тырăсене вырса илнĕ хыççăн çийĕнчех çемçетме тытăнмалла. Сухаласса предплужниклă плугсемпе сухаламалла, пĕр вăхăтрах сÿрелесе пымалла, катокпа якатса тухмалла. Унта çийĕнчех акма тытăнас пулать, пĕр ĕçе тунă хыççăн теприне вăраха хăварса пыни пачах пулмалла мар. Çакăн пек йĕрке пулмалла: паян ирхине комбайнпа е жнейкăпа тырă вырчĕç пулсан, кăнтăрла тăпрана сухалама пуçăнмалла, тепĕр кунхи ирхине вара акма тытăнмалла. Çакăн пек тусан, ÿсентăран хăвăрт шăтса тухать тата тухăçлăхĕ те пысăкрах пулать.

Ыраш е кĕрхи тулă хыççăн акнă ÿсентăран вăйлă пуласси мĕнле майпа тата мĕн чухлĕ вăрлăх акнинчен те чылай килет. Викăпа сĕлĕ хутăшне тата горчицăна сеялка речĕсем хушшине 13—15 сантиметр хăварса акмалла. Пĕр гектар çине 120—130 килограмм вика, 60—70 килограмм сĕлĕ кĕртмелле. Горчицăн норми пĕр гектар валли 16—18 килограмм пулмалла. Викăпа сĕлĕ хутăшĕн вăрлăхне 4—5 сантиметр, горчица вăрлăхне 2—3 сантиметр тарăнăшне акмалла. Тăпра типĕ пулсан, акнă хыççăнах пусса катокпа пусăрăнтарсан, унтан çăмăл сÿрепе пĕр хут сÿрелесе тухсан аван.

Выльăх апачĕ тумалли ÿсентăрансене кĕрхи тырăсене пухса илнĕ хыççăн мĕн май килнĕ таран хăвăрт акса хăвармалла. Çавăн пек чухне тин ÿсентăрансем аван ÿссе çитĕнме пултараççĕ. Малта пыракан колхозсемпе наука учрежденийĕсен практики çакна çирĕплетсе парать: агротехника правилисене тĕрĕс пурнăçласан, кĕрхи тырăсем хыççăн акнă выльăх апачĕ пысăк тухăçлă пулать. Акă, Запорожье облаçĕнчи Осипенко районĕнчи колхозсем асăннă майпа акса кашни гектартан 37-шер центнер судан курăкĕ туса илнĕ. Гомель облаçĕнчи Рогачевск районĕнчи «Красная Дубрава» ялхуçалăх артелĕ гектартан 270 центнер турнепс пухса кĕртнĕ.

Удобренисемпе усă курас пирки те каламалла. Белоруссири Турски опытлă станцин опытĕнчен çакă паллă: выльăх апачĕ акиччен пулнă культура валли гектар пуçне 20 тонна тислĕк тата минераллă удобренисем çителĕклĕ кăларсан турнепс тухăçлăхĕ 78,9 центнертан 232 центнера çити ÿснĕ.

Çулла выльăх апачĕ акни çĕрĕç культурине те лайăхлатать. Çăмахран, вăл çумкурăксене пĕтерме, выльăх апачĕ хыççăн акакан культура тухăçлăхне хăпартма пулăшать.

Колхозсемпе ялхуçалăх органĕсем тата МТС-сем умĕнче ответлă задача тăрать: тырпул пухса кĕртес ĕçе лайăх йĕркелесе, выльăх апачĕ тумалли ÿсентăрансене вăхăтра акса хăвармалла.

Т. КРУЖИЛИН,
Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн доценчĕ.

Колхозниксен хастарлăхĕ

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Июлĕн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). «Путь Ленина» колхоз виççĕмĕш кун ыраш вырать. Коммунист Федоров юлташ ертсе пыракан тăваттăмĕш бригада малта пырать. Бригада 20 гектар ыраш вырнă. Васильев тата Афанасьев юлташсем ертсе пыракан бригадăсем те паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Кашни бригадăрах жнейкăсемпе туллин усă кураççĕ. Çурлапа выракан колхозниксемпе колхозницăсем те тухăçлă ĕçлеççĕ. Р. Григорьевăпа Р. Сергеева комсомолкăсем, Р. Владимировăпа Е. Миронова çамрăк хĕрсем кунне 0.12 гектар вырăнне 0,14—0,15 гектар тырă выраççĕ.

Колхозниксене ĕçре коммунистсемпе комсомолецсем хавхалантарса пыраççĕ. Вĕсем тырпул пухса кĕртес ĕçре чи ответлă участоксенче ĕçлеççĕ. Агитаторсем хăйсен ĕçне уй-хире куçарнă, вĕсем каласусем ирттереççĕ, колхозниксене хаçат-журналсем вуласа параççĕ. Кашни бригадăрах боевой листоксем туса тăраççĕ. Пĕр номер «Миршĕн» стена хаçачĕ кăларнă.

Колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ пысăк. Вĕсем кĕрхи тырăсене çичĕ кун хушшинче, çуртрисене 15 кун хушшинче пухса кĕртессишĕн, Тăван çĕршыв умĕнчи пĕррремĕш тивĕçе—государствăна тырă памалли плана сентябрĕн пĕрремĕшĕ тĕлне тултарассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешеççĕ.

Договор тăрăх, машина-трактор станцийĕн комбайнсемпе колхозра 120 гектар тырă (вăл шутра 40 гектар ыраш) вырса памалла. Колхозниксем хĕрсех ыраш выраççĕ. Анчах МТС руководителĕсем (директорĕ И. Андреев юлташ) колхоза пырса лартнă комбайна халĕ те ĕçе ярамаççĕ.

— Комбайн валли запаслă пайсем çитмеççĕ,—тет колхозра ĕçлекен трактор бригадин бригадирĕ М. Павлов юлташ.

Машина-трактор станцийĕ тырпул пухса кĕртес ĕçре колхоза пулăшу пама тивĕç. Тырпул пухса кĕртесси—паян тумалли ответлă ĕç.

В. ЕФИМОВА.

Выльăх апачĕ хатĕрлеççĕ

ÇĔРПУ. «Цивильстрой» колхоз членĕсем çырмасенчи курăксене çулса пухса 125 тонна силос хыврĕç. Халĕ вăрманти курăксенчен силос хатĕрлеççĕ.

Колхозра выльăх-чĕрлĕх витисене хĕле хатĕрлес ĕçе те лайăх йĕркеленĕ.

Республикăри хуласемпе район центрĕсенче

Красноармейски

Красноармейски Çавал юханшывĕн Мăн Шетмĕ ятлă юппин сылтăм енче вырнаçнă. Район центрне тăвата енчен шоссе çулĕсем пырса кĕреççĕ. Вĕсем район центрне Шупашкарпа, Канашпа, Çĕрпÿпе тата Вăрнарпа çыхăнтараççĕ. Кашни кун çав мăн çулсем тăрăх нумай автомашинăсем иртсе çÿреççĕ.

Красноармейски Малти Трак ятлă ял пулнă. 1935 çулта ăна район центрĕ туса хунă. 1940 çулта, унăн ятне улăштарса, Красноармейски тесе ят панă.

Тĕттĕм те чухăн ял пулнă ĕлĕк Малти Трак. Вăл XIX-мĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче Етĕрне уездĕнчи Упи вулăсĕн центрĕ пулнă. 1891—92 çулсенче кăна кунта пуçламăш шкул уçнă. Анчах апла пулин те ял сăн-пичĕ улшăнман. Ялта хура хурал пÿрчĕпе сивĕ кантур çурчĕсĕр пуçне урăх нимех те пулман. Пуçламăш шкулта 15—16 ача çеç вĕреннĕ. Вĕсене пĕр учитель вĕрентнĕ.

Патша саманинче ялта пурăнакан халăхран 60 проценчĕ ытла çулсеренех çăкăрсăр ларнă, çынсем выçăпа нумай вилнĕ. Чирле çынсене сыватма больница пулман. Ялти ĕççыннисем кулаксемпе ытти тĕрлĕ харампырсен пусмăрĕнче тертленсе, асапланса пурăннă.

Совет влаçĕ кăна Трак çыннисене телейлĕ, савăнăçлă пурнăç туса пачĕ, ĕмĕрхи асаплăхран хăтарчĕ. Совет саманинче ял сăн-сăпачĕ тĕпренех çĕнелсе улшăнчĕ. Ĕççыннисем çутта тухрĕç. Вĕсем çĕнĕ пурнăçшăн, Тăван çĕршыва тĕреклетессишĕн ырмиканми ĕçлеççĕ. Кунта вăтам шкул, больница, промышленность предприятийĕсем, культура учрежденийĕсем ÿссе ларчĕç.

Вăрнара каякан çул çинче вырнаçнă икĕ хутлă вăтам шкул çурчĕ район центрне инçетренех илем кÿрет. Çак шкулта 800 çамрăка ялан вĕренет, 37 учитель ĕçлет. 1939 çултанпа шкултан 350 çамрăк ытла вĕренсе тухнă. Ун хыççăн вĕсенчен нумайăшĕ Мускаври, Хусанти, Шупашкарти тата ытти хуласенчи аслă шкулсенче вĕреннĕ, халĕ учительсем, инженерсем, врачсем, агрономсем пулса ĕçлеççĕ. Кăçал кăна шкултан 44 çамрăк вĕренсе тухрĕ.

Район центрне Çĕрпÿрен пырса кĕрекен шоссе хĕрринче районти больница вырнаçнă. Больница çулсеренех ÿссе пырать, унти стационарта койкăсен хисепĕ те ÿсет. Халĕ больницăра хирурги уйрăмĕ, шăл, куç тата ытти чирсенчен сыватмалли уйрăмсем ĕçлеççĕ. Çитес çывăх вăхăтсенче рентген кабинечĕ уçма палăртнă. Больницăра опытлă врачсемпе фельдшерсем тата акушеркăсем ĕçлеççĕ. Район центрĕнче ветлечебница пур.

МТС та район центрĕнчех. Юлашки çулсенче ялхуçалăх машинисен паркĕ хăвăрт ÿссе пырать. Иртнĕ çулта кăна МТС-а ДТ-54 маркăллă тракторсем 20, самоходнăй комбайнсем 5, трактортан кăкармалли плугсем, сеялкăсем, çĕрулмипе кăшман кăлармалли тата ытти йышши ялхуçалăх машинисем нумай илсе килнĕ. Халĕ çав çĕнĕ техникăпа МТС районти колхозсене пур ĕçре те пысăк пулăшу парса тăрать. Кăçал уйрăмах Супарти трактор бригади (бригадирĕ В. Егоров) тăрăшса ĕçлерĕ. Вăл çураки ĕçĕсен планне 111 процент, çулталăк планне 43 процент тултарнă.

Район центрĕнче çу, кирпĕч завочĕсем, промкомбинат тата промысла артелĕсем ĕçлеççĕ. Промышленность предприятисем ĕççыннисене куллен кирлĕ таварсен ассортиментне нумайлатнипе пĕрлех вĕсен пахалăхне те лайăхлатса пыраççĕ.

Район центрĕ ÿссе, илемленсе пырать. Юлашки çулсенче аптека, чăх чĕпписем кăларакан инкубатор станцийĕ тата ытти çĕнĕ çуртсем тунă.

Красноармейскинче халĕ 7 магазин, 2 чайнăй, лавккасем тата ытти суту-илÿ организацийĕсем пур. Вĕсем халăха тата колхозсене таварсем нумай сутаççĕ. Кăçал райпотребсоюзăн магазинĕсем çур çулхи тавар çаврăнăш планне 113 процент тултарнă. Колхозлă ял хресченĕсем магазинсенчен пусма таварсем, велосипедсем, мотоциклсем, радиоприемниксем тата ытти культура таварĕсем нумай туянаççĕ. Райпотребсоюз урлă районти колхозсем юлашки çулсенче государствăран 8 автомашина туянчĕç.

Октябрьти Аслă революциччен кунта культурăпа çутĕç учрежденийĕсем вуçех пулман. Халĕ район центрĕнче культура çурчĕ, библиотека, ача сачĕ тата ытти учрежденисем ĕçлеççĕ. Культура çуртĕнче Шупашкартан килекен артистсемпе ялсенчи колхоз çамрăкĕсен художествăлла пултарулăх коллективĕсен спектакльсем, концертсем тăтăшах пулаççĕ. Культура çуртĕ çумĕнче драма, юрăпа ташă кружокĕсем йĕркеленĕ.

Район центрĕнче пурăнакан служащисемпе колхозниксен пурнăçĕ çултан-çул лайăхланса пырать. Вĕсем хăйсем перекетленĕ укçа-тенкĕпе пурăнмалли çĕнĕ çуртсем нумай лартаççĕ. Халĕ кашни килĕрех Ильич лампочки çутатать, радио калаçать. Шап-шур шторăсемпе хитре самоварсем, тимĕр кроватьсемпе пысăк тĕкĕрсем ял çыннисен пÿрт ăшчиккине илем кÿреççĕ.

УКЕРЧĔКСЕМ ÇИНЧЕ: Красноармейскинчи МТС мастерскойĕн çурчĕ (сулахайра); вăтам шкул çурчĕ.

А. ПЕТРОВ фотоÿкерчĕкĕсем.

Телейлĕ те тулăх пурнăç туса панăшăн район центрĕнчи «Победа» колхоз членĕсем Коммунистсен партийĕпе Совет правительствине чун-чĕререн тав тăваççĕ. Халĕ колхоз ĕçченĕсем уй-хирти тырпула пĕр тăккаламасăр, вăхăтра пухса кĕртессишĕн тăрăшаççĕ.

А. МИХАЙЛОВ.

СССР Тинĕс-Çар Флочĕн кунĕ умĕн

Хуласемпе ялсенче, çар округĕсенче, çар шкулĕсенче, флотсемпе флотилисенче СССР Тинĕс-Çар Флочĕн кунне ирттерме хатĕрлеме пуçланă. Тинĕс-Çар Флочĕн мухтавлă историйĕ çинчен, совет морякĕсем Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче тунă паттăр ĕçсем çинчен пур çĕрте те докладсемпе лекцисем ирттереççĕ.

Çара, авиацие тата флота пулăшакан ирĕклĕ обществăн организацийĕсенче массăллă ăмăртусем пуçланнă. Пионер спортсменсем линкорсен, крейсерсен, миноносецсен, торпеднăй катерсен, шыв айĕн çÿрекен кимĕсен, суту-илÿ карапĕсемпе спорт кимĕсен моделĕсем мĕнле ĕçленине кăтартаççĕ.

Пĕтĕм халăхăн çитес праçникĕ ячĕпе нумай хуласемпе район центрĕсенче тинĕсре ишес енĕпе ăсталăха кăтартмалли ăмăртусем организациленĕ. ДОСААФ членĕсем шлюпкăсемпе тĕрлĕ дистанцисем хушшине ишсе тухас, ишес, семафорпа хыпарсене хăвăрт йышăнас тата пĕлтерес енĕпе, пĕчĕк калибрлă винтовкăпа перес енĕпе мала тухассишĕн ăмăртаççĕ.

Мускавран ДОСААФ-ăн темиçе команди шлюпкăсемпе похода тухса кайнă. Химкири водохранилищĕрен тата тепĕр икĕ команда похода тухса кайнă. Вĕсем парусемпе тата кĕсменсемпе ишсе Мускавран Углич хулине каймалли, унтан Мускава таврăнмалли маршрутпа çÿреççĕ. Кайнă чухне тинĕс-çар спорчĕн активисчĕсем çыранри хуласемпе ялсенче ДОСААФ-ăн столицăри организацийĕн ĕçĕсем çинчен каласа кăтартаççĕ, докладсемпе лекцисем ирттереççĕ.

СССР Тинĕс-Çар Флочĕн кунне уявланă ятпа Мускаври востоковедени институчĕн студенчĕсем шлюпкăпа Петрозаводска тухса кайнă. Горькири, Молотоври, Ульяновскри ДОСААФ членĕсем шлюпкăсемпе Куйбышева ситиччен похода кайма тухнă. (ТАСС).

Марксизм-ленинизм теорине вĕренекенсене пулăшма

Социализм вăхăтĕнчи таварлă производство тата хаклăх законĕ

«ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă гениллĕ ĕçре И. В. Сталин тата панă питĕ кирлĕ ыйтусенче пĕри — вăл социализм вăхăтĕнчи таварлă производство тата хаклăх законĕ çинчен тĕрĕслĕн ыйту пулать. Таварлă производство тата хаклăх законĕ çинчен тăракан проблема социализмăн политикăллă экономийĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрать. И. В. Сталинăн произведенийĕ пичетленсе тухиччен ку ыйтусем [illegible] пулнă. Сталин çак ыйтăва пур енĕпе те питĕ тĕплĕн тĕпчесе пăхнă, социализм вăхăтĕнчи таварлă производствăн уйрăмлăхĕсене, вăл капитализмла производствăран йăлтах урăхла пулса тăнине кăтартса панă. Социализмла обществăра таварлă производство кирлине никĕслесе парса, Сталин социализмла экономикăран коммунизмла экономикăна куçнă вăхăтри таварлă производствăпа хаклăх законĕн кун-çулне çутатса панă.

Таварлă производство тата хаклăх законĕ çинчен И. В. Сталин вĕрентни марксизм-ленинизмăн политикăллă экономине малалла аталантарса пуянлатать.

Таварлă производство тесе мĕне калаççĕ-ха? Çакă вăл продуктсене, рынокра сутни-илни урлă улăштарса илме туса кăларнине пĕлтерет. «Товар пулса тăтăр тесен, продукта улăштару урлă потребитель аллине парас пулать, уншăн вăл потребителе хаклăх пулса тăрать» (К. Маркс).

Таварлă производство ĕçлев обществăри çынсем хушшинче пайланнă тата производство продукчĕсем уйрăм харпăрлăх пулса тăнă никĕс çинче пуçланса кайнă. Вăл чураллăх тата феодализм строййĕсенче те пулнă, вĕсемшĕн ĕçлесе тăнă. Таварлă производство капитализмла обществăшăн та, социализмла обществăшăн та ĕçлет.

Таварлă производствăна капитализмла производствăпа пăтраштарма юрамасть. Пур йышши таварлă производство та мар капитализм патне илсе пырать. И. В. Сталин çапла кăтартса парать: «Таварлă производство капитализм патне çакăн чухне çеç илсе пырать: производство хатĕрĕсем тĕлĕшпе уйрăм харпăрлăх пур пулсан, ĕç вăйĕ рынока товар пулса тухать пулсан, ăна капиталист сутăн илме тата производство процесĕнче эксплуатацилеме пултарать пулсан, çапла вара, çĕршывра тара тытнипе ĕçлекен рабочисене капиталистсем эксплуатацилесе тăракан йĕрке пулсан çеç илсе пырать. Капитализмла производство вăл производство хатĕрĕсем уйрăм çынсен аллинче тăнă çĕрте, производство хатĕрĕсемсĕр тăрса юлнă рабочисем вара хăйсен ĕç вăйне сутмасăр пурăнайман çĕрте пуçланса каять. Çакăнсăр капитализмла производство пулма пултараймасть» («ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем», 14—15 стр.).

Октябрьти Социализмла Аслă революци çĕнтерниех тата пролетариат диктатури туса хунине пула, пирĕн çĕршывра производство хатĕрĕсем капитализмла уйрăм харпăрлăх пулса тăнине пĕтернĕ, фабрикăсемпе заводсем, çĕр обществăлла социализмла харпăрлăх пулса тăнă. Анчах та ялхуçалăхĕнче социализмла революци пулса иртнĕ хыççăн та, капитализмран социализма куçмалли тапхăрта, вак тата вăтам производительсем нумай пулнă, вĕсене экспроприацилеме юраман. Коммунистсен партийĕн питĕ кирлĕ задачи вăл — вĕсене пролетариат енне çавăрасси, вĕсене социализмла шутра хуçалăх çулĕ çине куçарасси пулнă. Социализмшăн кĕрешмелли программа палăртса, Ленин—Сталин партийĕ миллионшар хресченсене социализм тăвас ĕçе хутшăнма май паракан условисем хатĕрлемелли план йышăннă.

Хăшпĕр пули-пулми марксистсем çапла шутланă: производство хатĕрĕсене пурне те мар, пĕр пайне çеç пĕрлештернĕ пулсан, юрăхлă условисем пур пулсан та пролетариатăн влаçа илме кирлĕ мар, ăна илме миллионшар вак тата вăтам производительсене капитализм чухăна кăларса, батраксем туса хума тата ялхуçалăхĕнче производство хатĕрĕсене концентрацилеме ĕмĕрччен тăхтамалла, çакăн хыççăн кăна пролетариат влаçа илесси çинчен тата производствăн мĕнпур хатĕрĕсене пĕрлештересси çинчен ыйту лартмалла, тенĕ.

Марксизм-ленинизмăн тепĕр йышши тăшманĕсем: влаçа илсе, ялти вак тата вăтам производительсен производство хатĕрĕсене туртса илмелле, тенĕ.

В. И. Ленин тата И. В. Сталин марксизмăн çав тăшманĕсене кирлĕн çапса аркатнă. Коммунистсен партийĕ социализмла революци туса иртерессине паллă мар вăхăта хăварма, паллах, пултараймăн. Çавăн пекех вăл вак тата вăтам производительсене экспроприацилес çул çине те тăма шутламан, мĕншĕн тесен çавнашкал çул пролетарилле революци çĕнтермелли пур майсене те пĕтерсе хунă пулĕччĕ, хресченсене нумай вăхăтлăха пролетариат тăшманĕсен лагерьне кĕртсе янă пулĕччĕ.

Пирĕн Коммунистсен партийĕ пролетариатăн аслă çулпуçĕсем Ленинпа Сталин кăтартса панă çулпа кайрĕ. Вăл вак тата вăтам производительсене хăйсен ирĕкĕпе майĕпен производствăлла кооперацисене, тепĕр майĕ калассан; ялхуçалăхĕнчи шутра предприятисене — колхозсене пĕрлештерес, социализмла промышленность пулăшнипе вĕсене ку чухнехи техникăпа хĕрпĕшлентерес çул çине тăчĕ. Парти çапла хула, промышленноçпа ялхуçалăх хушшинчи экономикăлла çыхăнăва пурнăçласа пыма паллă таварлă производство кирлине кăтартса пачĕ, çакна май совет суту-илĕвне аталантарса пыма, тавар çаврăнăшĕнче пур йышши капиталистсене те хĕсĕе кăларма хушрĕ.

Пирĕн çĕршыври социализм строительствин опычĕ çак çул пĕтĕмĕшпех тĕрĕс пулнине кăтартса пачĕ. Аталанăвăн çав çулĕ капитализмла пур çĕршывсемшĕн те, вĕсенче вак тата вăтам производительсен хăшпĕр таран нумай йышлă класс пур пулсан, социализм çĕнтермелли пĕртен-пĕр пулма пултаракан тата юрăхлă çул пулса тăрать.

Капитализмран социализма куçнă тапхăрта таварлă производствăна пĕтермесĕр хăварса, Совет правительстви ăна социализм строительствине пăхăнтарчĕ. Çав тапхăрти таварлă производство капитализмăн таварлă производствинчен пачах уйăрăлса тăрать. Халăх хуçалăхĕн питĕ кирлĕ пайĕсем, чи малтан, промышленноçри тĕп производство хатĕрĕсем пирĕн патăрта малтанах пĕтĕм халăх пурлăхĕ пулса тăнă, вĕсем тавар пулма пăрахнă. Çавăн пекех çĕрпе те, шутра промышленноçри ĕç вăйĕпе те суту-илу тума ун чухнех чарнă. Куçăм тапхăрĕнче таварлă производство кирли вак хресчен хуçалăхĕсем пулнинчен килет. Вак хресчен хуçалăхĕ, уйрăм условисенче капитализм суратать пулин те, çапах та капитализмла хуçалăх мар-ха. Пролетариатла государствăн таварлă производствăна кирлĕ йĕркене лартма май пур, ăна социализмла промышленноçпа хресчен хуçалăхĕ хушшинчи экономикăлла çыхăнăва çирĕплетес тата социализм çĕнтерĕвĕшĕн капитализма хирĕç усă курма майсем пур. Пролетариат диктатурин çавăн пек майĕ экономикăлла çĕнĕ политика пулнă. Рынокпа усă курса, экономикăлла çĕнĕ политика капиталистла элементсене çĕнтерме, социализмла общество туса хума май панă.

ССР Союзĕнче социализм çĕнтерни экономикăлла çĕнĕ политикăна тытса пыни пĕтĕмпех тĕрĕс пулнине кăтартса пачĕ. Çав политика халăх демократи çĕршывĕсемшĕн те питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вĕсем, пирĕн çĕршыв опычĕ çине таянса, таварлă производствăпа усă курса, ăнăçлăн социализм патне утаççĕ.

Сталин юлташ «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенире таварлă производство социализм çĕнтернĕ хыççăн та кирлине кăтартса пачĕ. Хальхи вăхăтра пирĕн патра социализмла производствăн икĕ тĕп форми пур: государствăлла форма—пĕтĕм халăх производствин форми, тата колхозла, ушкăнла форма. Государство предприятийĕсенче — промышленноçра, совхозсемпе МТС-сенче производство хатĕрĕсем пĕтĕм халăх харпăрлăхĕ пулса тăраççĕ. Колхозсенче те тĕп производство хатĕрĕсем (çĕр, машинăсем) государство аллинче шутланаççĕ, анчах та производство продукцийĕ уйрăм колхозсен харпăрлăхĕ пулса тăрать.

Çакă вăл акă мĕн патне илсе пырать: государство хăйĕн предприятийĕсен продукцийĕпе çеç хăйне кирлĕ пек усă курма пултарать, колхозсен продукцийĕпе вара, вăл вĕсен харпăрлăхĕ пулнă пирки, колхозсем çеç хăйсене кирлĕ пек усă кураççĕ. «Анчах,—тесе кăтартса парать Сталин,—колхозсем хăйсен продукчĕсене товарсем вырăнне хурса кăна сутасшăн, вĕсемпе улăштарса хăйсене кирлĕ товарсем илесшĕн. Колхозсем хулапа çыхăнса тăрас ĕçре тавар сутса çыхăннисĕр пуçне, сутни-илнипе çыхăннисĕр пуçне урăх йышши экономикăлла çыхăнусене хальхи вăхăтра йышăнмаççĕ. Çавăнпа та пирĕн патра хальхи вăхăтра таварлă производствăпа тавар çаврăнăшĕ вăтăр çул ĕлĕкрех пулнă пекех, калăпăр, Ленин тавар çаврăнăшне пур майсемпе те сарса пыма кирли çинчен каланă вăхăтри пекех кирлĕ пулса тăраççĕ» («ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем», 16—17 стр.).

Çапла ĕнтĕ, пирĕн çĕршывра производствăн икĕ секторĕ пур чухне таварлă производствăпа тавар сутса илесси вăйрах юлмалла, вĕсем пирĕн халăх хуçалăхĕн системинче питех те усăллă тата кирлĕ элемент пулса тăраççĕ.

Пирĕн парти вак буржуалла сăпăлтусене—социализм тапхăрне кĕнĕ хыççăн суту-илĕве тата укçана пĕтерме вăхăт тесе сăпăлтатекенсене тăрă шыв çине кăларчĕ. Пирĕн çĕршывра суту-илу кулленкун вăйланса, укçа пĕрмаях çирĕпленсе пырать.

Социализм вăхăтĕнче промышленноçпа ялхуçалăхĕ çыхăнса тăрасси производствăлла çыхăну урлă ытларах пулса пырать, анчах та вăл кăна çителĕксĕр-ха, ăна таварлă çыхăну урлă та тĕреклетсе пымалла.

Промышленноçа, ялхуçалăхне тата тавар çаврăнăшне малалла аталантарса пырассишĕн Коммунистсен партийĕ ывăнма пĕлмесĕр тăрăшать. Вăрçă хыççăнхи тăваттăмĕш пилĕкçуллăх вĕçленнĕ тĕле государствăн суту-илу организацийĕсем тата кооперацисем товарсене вакăн сутнă укçа хисепĕ вăрçă умĕнхи шайран 30 процент ытла иртсе кайнă. Партин XIX-мĕш съездĕ пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче государство тата коопераци суту-илĕве енĕпе товарсене вакăн сутассине, 1950 çулхипе танлаштарсан, 70 процента яхăн ÿстерме пăхнă.

Социализм вăхăтĕнчи таварлă производство капитализм чухнехи таварлă производствăран тĕпрен уйрăлса тăрать. «...Пирĕн таварлă производство ахаль йышши таварлă производство мар, вăл уйрăм йышши таварлă производство, капиталистсемсĕр таварлă производство пулса тăрать; унăн ĕçĕ, тĕпрен илсен, пĕрлешнĕ социализмла производительсен (государство, колхозсем, кооперация) товарĕсемпе çыхăнса тăрать, вăл харпăр хăйне кулăм кирлĕ япаласем çеç туса тăрать; çав таварлă производство, паллах ĕнтĕ, нимĕнле те капитализмла производствăна аталанса кусма пултараймасть, унăн хăйĕн «укçа хуçалăхĕпе» пĕрле социализмла производствăна аталантарса çирĕплетес ĕçе пулăшса тăма тивет» (Савăнтах, 17 стр.).

ССР Союзĕнчи таварлă производствăн характерĕ пачах урăхла пулни социализмăн пĕтĕм экономикăлла стройĕнчен тухса тăрать. Ку акă мĕне пĕлтерет: пирĕн патра производство хатĕрĕсем уйрăм харпăрлăх пулса тăмаççĕ, тара тытса ĕçлеттерес йĕркене тата эксплуатацие пĕтернĕ; производство хатĕрĕсем обществăлла харпăрлăх пулса тăраççĕ. Пирĕн патра производствăра та, тавар çаврăнăшĕнче те капиталистсем çук. Çавăнпа та ĕнтĕ социализмла обществăра тавар урăхла производствăлла хутшăнусене палăртса тăрать.

Тавар çаврăнăшĕнчен пирĕн патра çĕрне те кăларнă, çавăн пекех ĕç вăйĕ те тавар пулса тăмасть. Производство хатĕрĕсем тытса тăракан рабочи класс, тесе ăнлантарса парать И. В. Сталин, хăйне хăй тара кĕрешме, хăйне хăй ĕç вăйĕ сутма пултараймасть.

Марксизм-ленинизм тавар çинчен вĕрентнине малалла аталантарса, И. В. Сталин тавар пирки çапла калать: «Тавар вăл производствăн кирек кама та сутма тунă продукчĕ пулса тăрать, кунсăр пуçне, çав тавар сутнă хыççăн тавар хуçин харпăрлăхĕ пулма пăрахать, тавара илекенни вара тавар хуçи пулса тăрать, вăл ăна урăх çынна сутма та, саклата хывма та, çĕртсе яма та пултарать» (Савăнтах, 52 стр.).

Çакна шута илсе, Сталин акă мĕн кăтартса панă: социализмла стройра производство хатĕрĕсене тавар тесе шутлама нимпе те юрамасть, социализмла обществăра вĕсене тавар çаврăнăшĕнчен кăларнă, вĕсене колхозсене те «сутмаççĕ», вĕсене государство хăйĕн предприятийĕсене валеççе кăна парать. Производство хатĕрĕсен хуçи—государство вĕсене предприятисене панă чухне производство хатĕрĕсен хăйĕн харпăрлăхĕ пулмалли правăна çухатмасть, çав правăна пĕтĕмĕшпех хăй аллинче хăварать.

Тулашри суту-илу çаврăнăшĕнче пирĕн предприятисем туса кăларакан производство хатĕрĕсем те таварăн пур паллисене те сыхласа хăвараççĕ. Социализмла промышленность туса кăларакан производство хатĕрĕсем тулашри суту-илу çаврăнăшĕнче таварăн паллисене мĕншĕн-ха чăннипех те, формальнă та сыхласа хăвараççĕ? Акă мĕншĕн: производство хатĕрĕсене урăх çĕршывсене сутсан, пирĕн государство вĕсем тĕлĕшпе хăйĕн харпăрлăх правине çухатать, вĕсем вара сутăн илекенĕн харпăрлăхĕ пулса тăраççĕ.

Çĕршыври шалти экономика çаврăнăшĕнче производство хатĕрĕсем тавар пулса тăмаççĕ терĕмĕр, анчах çапах та çиелтен пăхсан тавар пек курăнаççĕ. Çак хăйне евĕрлĕ уйрăмлăха мĕнле ăнлантарса памалла-ха?

И. В. Сталин кун пирки çапла çырать: «Ĕç акă мĕнре: пирĕн социализмла условисенче экономика переворотсем пулнипе мар, майĕпен улшăнусем пулнипе аталанса пырать, çакăн чухне кивви ахаль кăна пăрахăçа тухмасть, вăл хăйĕн ăшчиккине çĕнни майлă улăштарать, хăйĕн формине çеç сыхласа хăварать; çĕнни вара киввине ахаль кăна пĕтерсе хумасть, кивви ăшне кĕрсе пырать, унăн формине çĕмĕрмесĕр, унпа çĕннине аталантарма усă курса, киввин ăшчиккине, унăн функцийĕсене улăштарать. Пирĕн экономика çаврăнăшĕнче товарсем тĕлĕшпе çеç мар, укçа тĕлĕшпе те, çавнашкалах банксем тĕлĕшпе те ĕç çавăн пекех тăрать: вĕсем, хăйсен кивĕ функцийĕсене çухатса тата çĕнĕ функцисем йышăнса, хăйсен кивĕ формине сыхласа хăвараççĕ, çав формăпа вара социализмла строй усă курать» (Савăнтах, 53 стр.).

Социализмла обществăра экономикăлла процесăн содержанийĕпе форми хушшинчи уйрăмлăха, аталанăвăн тĕпри процесĕсемпе çиелти явленийĕсем хушшинчи уйрăмлăха тĕплĕн шута илме кирли çинчен Сталин кăтартса пани питех те паха. Вăл пире социализмла обществăри экономикăлла нумай явленисене тĕрĕс ăнланса илме май парать, мĕншĕн тесен капитализмăн кивĕ категорийĕсенчен пирĕн патра пуринчен ытла тулашри форма сыхланса юлнă. Содержани тĕлĕшпе вĕсем социализмла халăх хуçалăхĕн аталанăвне кирлĕ май тĕпренех улшăннă.

* * *

И. В. Сталин социализм вăхăтĕнчи хаклăх законĕ çинчен вĕрентни те теорипе практика тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Хаклăх законĕн ăшчикки акă мĕнре: товарсене улăштарса илесси вĕсене туса кăларма обществăлла кирлĕ ĕç мĕн чухлĕ кайнине кура пулса пырать. «Таварсем тата таварлă производство пур çĕрте хаклăх законĕ те пулмасăр тăма пултараймасть», тесе палăртать И. В. Сталин.

Таварлă производство законĕ пулнă май, хаклăх законĕ капитализмчченех пулнă, вăл, таварлă производство пекех, капитализма сирпĕтсе антарнă хыççăн та юлать-ха. Çавна пирĕн çĕршыврах курма пулать, анчах, калас-салла, пирĕн экономикăлла строй вăхăтĕнче хаклăх законĕн ĕçĕсен анлăшне хытă пÿлнĕ тата ăна висесе лартнă.

Капитализм вăхăтĕнче, производство хатĕрĕсем уйрăм харпăрлăх пулнă чухне, конкуренци пулнă чухне, производство анархийĕ пулнă чухне хаклăх законĕ производство тата распределени регуляторĕ пулса тăрать. Çав закон урлă обществăлла ĕçлеве тата капитала производствăн уйрăм отраслĕсем хушшинче валеçесси стихийăлла йĕркепе майлашăнса пырать. Капитал ялан пысăк хаклă производство отраслĕсене, çапла вара, услам ытларах илме май пур вырăнсене кусма тăрăшать; услам сахал паракан производство отраслĕсенчен вăл пăрăнса каять. Хаклăх законĕн вăйĕ ĕç вăйне те пырса тивет, мĕншĕн тесен вăл капитализм условийĕсенче тавар пулса тăрать. Çав закон капитализм вăхăтĕнче перепроизводство кризисĕсем патне, производительнăй вăйсене питĕ вăйлăн арканасси патне илсе пырать.

Социализм чухне ĕç пачах урăхла. Кунта хаклăх законĕ производство регуляторĕ пулса тăмасть. Ăна пирĕн патра кирлĕ висене лартнă, терĕмĕр. Производство хатĕрĕсем уйрăм харпăрлăх пулманни, халăх хуçалăхне план йĕркипе аталантармалли закон, çулталăкла тата пилĕк çуллăх плансем, пĕтĕмĕшпе каласан, пирĕн пĕтĕм хуçалăх политики хаклăх законĕн анлăшне хытă пÿлсе тăрать. Пирĕн патра хаклăх законĕн ĕçĕн анлăшĕ чи малтан товарсем сутса илни çине, сутни-илни урлă товарсем улăштарни çине, пуринчен ытла куллен кирлĕ товарсене улăштарни çине саралать. Кунта хаклăх законĕ, паллах, хăшпĕр таран регулятор вырăнне сыхланса юлать. Совет Союзĕнче хаксем «ирĕклĕн» выляса тăни çук. Ку вăл производствăна планланинчен тата рыноксенчи хаксене государство тунинчен килет. Товарсен хакĕсем вĕсен хаклăхĕнчен пăрăнкалани колхоз рынокĕсенче тата çавăн йышши ытти рыноксенче тĕл пулать, анчах кунта та государство йĕркелесе тăни сисĕнет.

Анчах хаклăх законĕн ĕçĕн анлăшĕ тавар сутса илни çине сарăлнипех чарăнса тăмасть, тесе кăтартса парать Сталин юлташ, унăн ĕçĕсем производство çине те сарăлаççĕ. Чăн та, кунта хаклăх законĕ регулятор вырăнĕнче тăмасть. Ĕç акă мĕнре: производство процесĕнче тухакан ĕç вăйне çĕнетме куллен кирлĕ продуктсене пирĕн патра товарсем пек туса кăларса сутаççĕ, вĕсем хаклăх законĕн вăйĕсене пăхăнаççĕ. Шăпах çакăнта курăнать те ĕнтĕ хаклăх законĕн производство çине сарăлакан вăйĕ. Çакна май пирĕн предприятисенче çак ыйтусем: хуçалăх расчечĕпе тупăшлăх çинчен, товарсен хăйне ларакан хаклăхĕ çинчен, хаксем çинчен тăракан ыйтусем питех те кирлĕ ыйтусем пулса тăраççĕ.

Продуктсем тума тухакан ĕçлев хисепне социализм обществинче хаклăхпа виçеççĕ. Хаклăх йĕркине учет туни производствăпа потреблениене, туса кăларакан продукцине калькуляци тунине контроллеме, предприяти тупăшлă е тупăшсăр пулнине пĕлме тенкĕпе контроллесе тăма май парать. Социализмла предприятин производствăлла ĕçне контроллесе тăма, предприяти тупăшлă е тупăшсăр пулнине пĕлме ĕçе тата унăн результатне пĕтĕмпех укçапа висни кирлĕ. Пирĕн хозяйственниксем хаклăх законне шута илни питĕ те пысăк вырăн йышăнса тăрать, мĕншĕн тесен çакă вăл вĕсене производствăна лайăх тытса пыма вĕрентет.

Сталин юлташ çапла кăтартса парать: хаклăх законĕ вăйра пулни пирĕн хозяйственниксене производствăри висесене шута илме, производствăра курăнмасăр выртакан резервсене тупса çÿреме мар, вĕсене тупма тата вĕсемпе усă курма, производство меслечĕсене тăтăшах лайăхлатса пыма, производствăн хăйне ларакан хакне йÿнетме, хуçалăх расчетне пурнăçа кĕртме тата предприятисене тупăшлăн ĕçлекен тума вĕрентет.

Продукцин хăйне ларакан хакне тăтăшах чакарса пырассишĕн, унăн пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешни—предприятин тупăшлăхне ÿстерсе пымалли тĕп условисем. Туса кăларакан продукцин хăйне ларакан хакĕ мĕн чухлĕ йÿнĕрех, çавăн чухлĕ предприяти тупăшлăхĕ те пысăкрах.

Сталин юлташ социализмла экономикăри тупăшлăха наукăлла определени пачĕ. Вăл пĕр хут çеç мар çапла асăрхаттарнă: тупăшлăх çине паянхи куна шута илсе е производствăн уйрăм предприятийĕсемпе отраслĕсем енĕпе çеç пăхмалла мар.

«Тупăшлăха,—тесе вĕрентет Сталин юлташ,—производствăн уйрăм предприятийĕсем е отраслĕсем енчен илсе мар тата пĕр çул енчен илсе мар,—пĕтĕм халăх хуçалăхĕ енчен, калăпăр, 10—15 çул хушшинчи аталану енчен илсе пăхсан (ку вăл ыйтăва тĕрĕс ăнланмалли пĕртен-пĕр май пулнă пулĕччĕ), çакă курăнать: производствăн уйрăм предприятийĕсен е отраслĕсен вăхăтлăх тата çирĕп мар тупăшлăхĕ халăх хуçалăхне план йĕркипе аталантармалли законăн тата халăх хуçалăхне планланин вăйĕсем пире паракан тупăшлăхăн чи çÿлте тăракан, яланлăха пыракан çирĕп формипе нимĕн чухлĕ те танлашма пултараймасть, вĕсен вăйĕсем пире вăхăтран вăхăта пулакан, халăх хуçалăхне ишĕлтерекен тата обществăна пурлăх тĕлĕшпе калама çук пысăк сиен тăвакан экономикăлла кризиссенчен хăтараççĕ тата халăх хуçалăхне пысăк хăвăртлăхсемпе вĕçĕмсĕр ÿстерме пире май туса параççĕ» (Савăнтах, 24—25 стр.).

Анчах та çакăнтан производствăн уйрăм предприятийĕсемпе отраслĕсен тупăшлăхĕ пит кирлех те мар, ун çине тимлĕн çаврăнса пăхмасан та юрать, тесе вывод туни тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ, тесе асăрхаттарать Сталин юлташ. Производствăн уйрăм предприятийĕсемпе отраслĕсен тупăшлăхĕ хăйĕрăн производствăна аталантарас ĕçре питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ăна строительствăна планланă чухне те, производствăна планланă чухне те шута илмелле. Хозяйственниксем,—тесе каланă партин XIX-мĕш съездĕ пилĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче, — производствăн курăнмăн резервĕсене тупма тата вĕсемпе усă курма, пĕтĕм производство хатĕрĕсене мĕн май килнĕ таран усă курма, производство меслечĕсене тăтăшах лайăхлатса, производствăн хăйне ларакан хакне йÿнетсе тата хуçалăх расчетне пурнăçласа пыма тивĕç. Материалсене тата оборудование ытлашши расходласине пĕтерсе, брака хирĕç кĕрешессине вăйлатса, хозяйственниксен материальнăй ресурссене чылай сыхласа хăварас ĕçе пурнăçламалла.

Съездăн çак директивисем Сталин юлташ хаклăх законĕ вăйра пулнине шута илме, унпа производствăна лайăх организацилес ĕçре усă курма кирли çинчен кăтартса панисемпе килĕшсе тăраççĕ.

«Инкек хаклăх законĕ хăйĕн вăйне пирĕн производство çине сарнинче мар, — тесе кăтартса парать Сталин юлташ. — Инкек акă мĕнре: пирĕн хозяйственниксемпе плановиксем, хăшĕ-пĕрисемсĕр пуçне, хаклăх законĕн вăйĕсене начар пĕлеççĕ, вĕсене тĕпчесе вĕренмеççĕ тата хăйсен расчечĕсенче вĕсене шута илме пĕлмеççĕ» (Савăнтах, 21 стр.).

Çапла ĕнтĕ, социализмла производствăн хальхи вăхăтри аталанăвне тĕрĕс ертсе пырас тесен, пирĕн хозяйственниксен хаклăх законне тата унăн вăйне вĕренмелле, вĕсемпе ĕçре тĕрĕс усă курмалла.

Хаклăх законĕ социализм вăхăтĕнче производство регуляторĕ пулса тăмасть тата производствăн тĕрлĕ отраслĕсем хушшинче ĕçлеве валеççе тăрас тĕлĕшпе «пропорцисен регуляторĕ» пулма пултараймасть. Хаклăх законĕ производствăн тĕрлĕ отраслĕсем хушшинче ĕçлеме валеççе тăрас тĕлĕшпе «пропорцисен регуляторĕ» пулса тăман пирки ĕнтĕ пирĕн патра йывăр промышленность çăмăл промышленноçран хытăрах аталанса пырать. Каламасăрах паллă, производство хатĕрĕсем туса кăларассине малти вырăна лартмасăр халăх хуçалăхне пĕрмаях аталантарса пыма çук. Социализмăн экономикăлла тĕп законне тата халăх хуçалăхне план йĕркипе (пропорци йĕркипе) аталантармалли закона шута илсе, социализмла государство производство хатĕрĕсемпе тата ĕç ресурсĕсене хуçалăх отраслĕсене пĕлсе уйăрса парать.

Социализмла обществăра хаклăх законĕ вăйра пулни хаклăх капитал пулса каясси патне илсе пымасть. Пирĕн экономикăлла строй вăхăтĕнче хаклăх законĕн ĕçĕсен анлăшне хытă пÿлнĕ тесе каланăччĕ, çавна май вăл капитализм чухнехи пек экономикăлла кризиссем çуратмасть. Совет государстви, экономикăлла законсене пĕлсе тăрса, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, пирĕн экономикăн аталанăвне социализмран майĕпен коммунизма куçас çулпа илсе пырать.

Пирĕн литературăра хаклăх законне «урăхлатса çĕнетни» çинчен калакан формула нумай вăхăт хушши çÿрерĕ. Сталин юлташ вăл тĕрĕс маррине кăтартса пачĕ. «Законсене» урăхлатса çĕнетме», çитменнине тата «тĕпренех урăхлатса çĕнетме» çук»,—тесе вĕрентет Сталин юлташ.

Хаклăх законĕ яланах вăйра тăракан, истори аталанăвĕн пур тапхăрĕсемшĕн те юрăхлă закон пулса тăмасть. Хаклăх вăл, хаклăх законĕ пекех, историллĕ категори пулса тăрать, вăл таварлă производство пуррипе çыхăнса тăрать. Таварлă производство пĕтсен, хаклăх та хăйĕн формисемпе пĕтет, хаклăх законĕ те пĕтет.

Социализм вăхăтĕнче таварлă производство харпăрлăхăн икĕ форми çинче—государствăлла форма е пĕтĕм халăх производствин форми тата колхозла форма çинче никĕсленсе тăрать. Хальхи вăхăтра тавар çаврăнăшĕ тата колхозла харпăрлăх социализмла хуçалăха аталантарма ăнăçлăн пулăшаççĕ. Çав вăхăтрах Сталин юлташ çапла кăтартса пачĕ: коммунизмла обществăн иккĕмĕш сыпăкĕ таварлă производствăпа тата хаклăх законĕпе килĕшсе тăма пултараймасть. Производствăн икĕ тĕп секторĕ вырăнне, государство секторĕпе колхоз секторĕ вырăнне, пурне те пĕрлештерсе тăракан пĕр сектор, çĕршывра туса кăларакан куллен кирлĕ пĕтĕм продукцие хăйне кирлĕ пек тытса тăракан сектор пулса тăрсан, таварлă производство, тавар сутса илесси, çавăн пекех хаклăх законĕ те пĕтсе ларĕç. Коммунизм обществинче ĕçлев хисепне таварлă производство вăхăтĕнче виçнĕ пек аякри майпа виçмĕç, хаклăхпа тата унăн формисемпе виçмĕç, ăна тÿрех—продуктсем тунă çĕре кайнă вăхăт хисепĕпе, сехет хисепĕпе виçĕç.

Коммунизма куçмалли условисене кăтартса парса, Сталин юлташ çапла каларĕ: колхозсене усă курсе, майĕпен улшăнусем туса пынипе колхозла харпăрлăха пĕтĕм халăх харпăрлăхĕн шайне çити çĕклемелле, çавăн пекех майĕпен улшăнусем туса пынипе, тавар сутса илни вырăнне продуктпа продукт улăштарса илес йĕрке тумалла. Колхозла харпăрлăха пĕтĕм халăх харпăрлăхĕн шайне çити çĕклес тесен, тет Сталин юлташ, колхоз производствин ытлашши продукчĕсене тавар пек сутса илес йĕркерен кăлармалла та вĕсене государство промышленноçĕпе колхозсем хушшинче продуктпа продукт улăштарса илес йĕркене кĕртмелле. Хатĕрлевĕн хальхи системинчех хăшпĕр ялхуçалăх продукчĕсем тĕлĕшпе продуктпа продукт улăштарса илес ĕçĕн пуçламăшĕсем пур. Продуктпа продукт улăштарса илесси, производительнăй вăйсем аталанса пынă май, пурнăçа майĕпен тăтăшах кĕрсе пырĕ. Çакăн пек йĕрке, тавар сутса илес ĕçĕн анлăшне чакарса, социализмран майĕпен коммунизма куçассине хатĕрлесе пырать.

М. ГРИГОРЬЕВ,
Педагогика институчĕн марксизм-ленинизм кафедрин преподавателĕ.

СССР Ют çĕршывсен Ĕçĕсен Министерствинче

Кăçалхи июлĕн 20-мĕшĕнче СССР Ют çĕршывсен Ĕçĕсен Министрĕн Заместителĕ В. А. Зорин Турци Республикин Мускаври Посолне Хозар господина нота панă, унта çапла çырнă:

«Совет Социализмла Республикисен Союзĕн Ют çĕршывсен Ĕçĕсен Министерстви Турци Республикин Посольствине çакан çинчен пĕлтерет.

Турци Ют çĕршывсен Ĕçĕсен Министерстви Совет Союзĕн Анкарари Посольствине июлĕн 22-мĕшĕпе 27-мĕшĕ хушшинчи тапхăрта Стамбул портне США çар карапĕсен соединенийĕ пулас çинчен, çав соединенийĕнче 10 карап, ку шутра 2 крейсер, 3 эсминец, 4 тральщик тата десант антармалли пĕр карап пулмалли çинчен пĕлтернĕ.

Кун хыççăн Турци Ют çĕршывсен Ĕçĕсен Министерстви Совет Союзĕн Посольствине июлĕн 27-мĕшĕпе августăн 3-мĕшĕ хушшинче Стамбул портне Англи çар карапĕсен соединенийĕ пулать, унта 22 карап, вăл шутра 3 крейсер, 4 эсминец, 6 тральщик, десант антармалли 4 карап пулать, тесе пĕлтернĕ.

Турци Ют çĕршывсен Ĕçĕсен Министерстви çапла пĕлтернĕ май, юлашки вăхăтра Хура тинĕс проливĕсен порчĕсене ют çĕршывсен çар карапĕсен соединенийĕсем, çав шутра пысăк çар карапĕсем, час-часах пырса çÿреме тытăнни çинчен асăрхаттармасăр иртерсе яма çук, Стамбул портне Америкăн 10 çар карапĕ тата Англин 22 çар карапĕ пынине çар енĕпе хăйне евĕрлĕ демонстраци туни тесе каламалла пулать.

Çÿлте асаннисене шута илсе, Совет Правительстви çав карапсем пыни пирки Турци Правительствинчен çĕнĕ сведенисем илессе шанать».

Хозар господин çак нотăна Турци Правительствине пама пулнă.

„Агитатор блокночĕн“ черетлĕ номерĕ

КПСС Чăваш обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ кăларакан «Агитатор блокночĕн» черетлĕ, 14-мĕш номерĕ пичетленсе тухнă.

«Блокнотăн» умстатьи — «Агитаторсен тырпул пухса кĕртнĕ тата государствăна тырă панă вăхăтри задачисем» ятлă. Агитаци ĕçĕн опычĕнчен ятлă пайра Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Коммунизм» колхозăн парторганизаци секретарĕн А. Мареева юлташăн статьи пур. Унта агитколлективăн тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтри ĕç планĕ çинчен каласа панă.

«Каласу иртермелли материалсем» ятлă пайра «Партин, правительствăн, совет халăхĕн никам аркатайми пĕрлĕхĕ» ятлă статья пичетленнĕ. Чугун çул работникĕсен кунĕ çинчен иртерекен калаçусене усă курма совет чугун çул транспорчĕн ĕçĕсене кăтартса паракан цифрăсемпе фактсем пур.

Кĕскен

Хисеп грамоти илнĕ. Канаш районĕнчи Асхвари клуб çумĕнчи драма кружокĕ лайăх ĕçлет. Кружок членĕсем спектакльсем тăтăшах лартса параççĕ, вĕсене ĕççыннисем яланах тулли кăмăлпа пăхаççĕ. Культурăлла-массăлла ĕçе лайăх туса пынăшăн драма коллективĕ ВЛКСМ обкомĕн Хисеп грамотине илме тивĕçлĕ пулнă.

Лекцисемпе докладсем. Шупашкарти аэроклубра вĕренекенсем хушшинче час-часах лекцисемпе докладсем иртерессĕ. Нумаях пулмасть КПСС обкомĕн лекторĕ Григорьев юлташ совет çамрăкĕсем çинчен лекци вуласа панă.

Пысăк пĕве. Нумаях пулмасть «Колос» колхозри (Сĕнтĕр районĕ) пысăк пĕве тунă. Унăн сарлакăшĕ 16 метр, тарăнăшĕ 8 метр. Пĕвери шыва хуçалăха анлă усă курассĕ.

„Коммунизм ялавĕ“ хаçатра çырнă хыççăн

„Туссемпе юссем“

КПСС Советски райкомĕ «Коммунизм ялавĕ» хаçатра июнĕн 21-мĕшĕнче пичетленсе тухнă «Туссемпе юссем» ятлă фельетонра çитменлĕхсене тĕрĕс кăтартса пани çинчен пĕлтерчĕ.

Ĕççынни депутачĕсен Советски район Совет исполкомĕн ялхуçалăхне хатĕрлев управленийĕн бухгалтерĕ пулнă Кузьмина 18.100 тенкĕ укçа салатнăшăн ответ тыттарма ĕçе районти прокурора панă. Ялхуçалăхне хатĕрлев управленийĕн главнăй ветеринарнăй врачĕ Миронов (çĕрсе органĕсенче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕн председателĕ пулнă май) членсен укçи 3.100 тенкĕ салатса янă, пĕрмай ĕçсе çÿренĕ. Хальхи ăна вырăнтан кăларнă, укçа салатнăшăн ответ тыттарма ĕçе прокуратурăна панă.

«КИРПĔЧ ЫТЛАРАХ ТУСА КĂЛАРМАЛЛА, ПАХАЛĂХНЕ ЛАЙĂХЛАТМАЛЛА»

«Коммунизм ялавĕ» хаçатра июнĕн 5-мĕшĕнче Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн каменщикĕсен «Кирпĕч ытларах туса кăлармалла, пахалăхне лайăхлатмалла» ятлă çырăвĕ пичетленнĕччĕ. Иванскинчи кирпĕч заводĕнчен çырăва производствăна служащисен тата инженерла-техника работникĕсен пухăвĕнче сÿтсе явни, çырура асăннă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе мерăсем йышăнни çинчен пĕлтерчĕ.

Завод директорĕ пĕлтернĕ тăрăх, юлашки вăхăтра кирпĕч пахалăхĕ нумай лайăхланнă, июнь уйăхĕнче хĕртнĕ кирпĕчĕн 97,5 процентне пĕрремĕш сортпа йышăннă.

Совет Союзĕпе Израиль хушшинче çĕнĕрен дипломатиллĕ çыхăнусем тытмалла тунă

Майăн 28-мĕшĕнче Израиль Государствин Правительстви хăйĕн Болгарири посланникĕ урлă Совет Союзĕн Болгарири посолне Израиль Правительстви Совет Союзĕпе Израиль хушшинче çĕнĕрен дипломатиллĕ çыхăнусем тытмалла тăвасшăн пулни çинчен пĕлтернĕ. Совет Правительстви кăçалхи февралĕн 12-мĕшĕнче Совет Союзĕн Израильти Миссийĕнче бомба çурăлнă пирки Совет Союзĕпе Израиль хушшинче дипломатиллĕ çыхăнусем тытма пăрахнăччĕ ĕнтĕ.

Кун çыççăн калаçусем пулса иртнĕ май июлĕн 6-мĕшĕнче Израиль Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ М. Шарет СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ В. М. Молотов патне çакăн пек çыру янă:

«Сирĕн Превосходительство,

Израиль Правительстви юлашки вăхăтра тĕнчере пăру-тăру чылай лайăхланнине тата тĕнчери тытса пымалли тĕп ыйтусене мирлĕ тата усăллă майпа йĕркелес шухăш çĕнĕрен анлă сарăлнине палăртать. Мире юрататан мĕнпур çĕршывсемпе туслă пулма тăрăшакан политикăна илсе пынă тытса пырса тата вăй çитнĕ таран, мĕнпур халăхсем хушшинче йĕркеллĕ çыхăнусем тытмалла тума пулăшса пырса, Израиль Правительстви хальхи условисенче Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Израиль хушшинче çĕнĕрен дипломатиллĕ çыхăнусем тытмалла тăвас ыйтăва хускатасшăн.

2. Совет Союзĕн Тель-Авиври Миссийĕнче темĕнле пăллă мар преступникĕсем хунă бомба çурăлнă тата çавăн чухне çынсене инкек тата пурлăха сиен пулнă хыççăн Совет Союзĕн Правительстви Израильпе дипломатиллĕ çыхăнусем тытма пăрахнăччĕ. Израиль Правительстви çакăн çинчен аса илтерет: вăл 1953 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче СССР Союзĕн Тель-Авиври Миссине пайă нотăра çав Миссие хирĕç преступленилле ĕç пулнă пирки хăй хытă пăшăрханни тата каçару ыйтни çинчен пĕлтернĕччĕ, çавăн чухнех тата Миссире унта ĕçлекенсем инкек тӳснĕшĕн тата пурлăха сиен пулнăшăн пĕтĕмпех тӳлесе татма пулнăччĕ. Израиль полицийĕ преступниксене тытса айăпламашăн пĕтĕм вăй хурса тăрăшрĕ. Кам преступлени тунине палăртма май паракан пăллăсене тупас тĕлĕшпе çав айăплă ĕçе вырăнта тĕпчесе пĕлме, Израиль полицийĕнчен килмен сăлтавпа, ку ĕç пулнă хыççăн 15 сехет иртсен тин тытăнма май пулнине пурте пĕлеççĕ. Хăшпĕр организацисен кантурĕсене, çавăн пекех уйрăм çуртсене тата çав ĕçе хутшăннă тесе шутланă темиçе вуншар çынна тĕплĕн ухтарнăччĕ тата тĕпчесе пĕлме тытса хупнăччĕ.

Пăшăрханмалла пулин те, çавăн пек йĕрлениччен халиччен нимĕн усси те пулмарĕ. Анчах çак ĕçе халĕ те чарса хартман, кам айăплине тупмалли паллăсене тимлĕн шыраççĕ. Халĕ те преступниксене тытса хупма, суд тума, тивĕçлĕ наказани пама май килĕ, тесе шанса тăратпăр.

3. Израиль Правительстви хăй 1951 çулхи декабрĕн 8-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин 1951 çулхи ноябрĕн 21-мĕшĕнчи нотине хирĕç панă ответ çинчен аса илтерме шутлать, унта вăл çапла каланăччĕ:

«Израиль ССР Союзне е мире юрататан ытти кирек хăш государствăна хирĕçле агрессиллĕ ĕçсене пурнăçлама тата çавăн пек ĕçсене хатĕрленме пулăшма нихçан та килĕшмен, малашне те килĕшес çук». Ку политика пĕр улшăнмасăр юлать. Израилĕн ССР Союзĕ тĕлĕшпе тăшманла шухăш çук. Пачах урăхла, вăл Совет Союзĕпе туслă тата мирлĕ çыхăнусем тытмалла тума тата çавăн пек çыхăнусем тытма тăрăшать. Израиль Совет Союзне хирĕç агрессиллĕ тĕллев тытакан нимĕнле союза та е нимĕнле килĕшĕве те хутшăнмĕ.

4. Израиль Правительстви Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствине халăхсем хушшинчи чăн-чăн туслă, йĕркеллĕ дипломатиллĕ çыхăнусем пулмалла тума, 1953 çулхи февралĕн 12-мĕшĕнче çав çыхăнусене тытма пăрахнă пулсан, çĕнĕрен çавăн пек çыхăнусем тытмалла тума официальнăй йĕркепе сĕнет.

Çак çырăва янă май эпĕ Ваше Превосходительствăна питех те хисеплени çинчен пĕлтеретĕп.

М. ШАРЕТ

Израиль Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ

1953 çулхи июлĕн 6-мĕшĕ».

Июлĕн 15-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ В. М. Молотов Израиль Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн М. Шаретăн çырăвне хирĕç çакăн пек ответ янă:

«Министр господин,

Эсир 1953 çулхи июлĕн 6-мĕшĕнче янă çыру пирки çапла пĕлтеретĕп:

Февралĕн 9-мĕшĕнче ССР Союзĕн Израильти Миссийĕн территорийĕнче усал ĕç тăвакан çынсем хунă бомба çурăлнине, çавăн чухне Мисси сотрудникĕ тата Миссири хăшпĕр сотрудникĕсен çемйисен членĕсем йывăр аманнине, çавăн пирки Совет Правительстви Совет Союзĕн Израильти Посланникне тата хăйĕн Миссийĕн составне пĕтĕмпех каялла чĕнсе илнине тата Израиль Правительствипе дипломатиллĕ çыхăнусем тытма пăрахнине пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ.

Майăн 28-мĕшĕнче Израиль Правительстви Совет Правительствине Израильпе Совет Союзĕ хушшинче çĕнĕрен дипломатиллĕ çыхăнусем тытмалла тума сĕнчĕ.

Совет Правительстви асăннă сĕнĕве пăхса тухнă чухне çакна шута илчĕ: Совет Союзĕн Тель-Авиври Миссине хирĕç преступленилле ĕç пулнă пирки Израиль Правительстви хăй хытă пăшăрханни çинчен пĕлтерчĕ тата каçару ыйтрĕ, айăплисене шырани нимĕнле усăллă результатсем паман пулин те, Израиль Правительстви, вăл хăй пĕлтернĕ тăрăх, айăплисене, тытса хупас тата суда парас шутпа, халĕ те шырать.

Совет Правительстви çавăн пекех Израиль Правительстви хăй Совет Союзне хирĕçле агрессиллĕ тĕллевсем тытакан нимĕнле союза та е килĕшĕве те хутшăнас çук тесе пĕлтернине шута илчĕ.

Израиль Правительстви шантарса каланине шута илсе, вăл Совет Союзĕпе туслă çыхăнусем тытмалла тума тăрăшни çинчен тата хăй ытти çĕршывсемпе йĕркеллĕ çыхăнса тăма тата халăхсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесе пурăнассине çирĕплетме тăрăшас политика тытса пырасси çинчен каланине шута илсе, Совет Правительстви те хăй енчен Израильпе туслă çыхăнусем тытма шутлани çинчен пĕлтерет тата Израиль Правительствипе çĕнĕрен дипломатиллĕ çыхăнусем тытмалла тума май пур тесе шутлать.

Министр господин, эпĕ Сире питех те хисеплени çинчен пĕлтернине йышăнма ыйтатăп

В. МОЛОТОВ

1953 çулхи июлĕн 15-мĕшĕ».

Вагонсен çаврăнăшне хăвăртлатасси çинчен

Канаш станцийĕ плана чылай кăтартусем тăрăх тăташах тултарса пырать. Анчах ун ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пулнă: вăл вагонсене вăхăтра тиесе пушатаймаст. Вагонсем нормăпа палăртнинчен темиçешер сехет ытларах ахаль лараççĕ. Çакă коллектива хытă хумхантаратчĕ. Коммунистсен пĕрлехи пухăвĕнче, ертсе пыракан работниксен тата составительсен канашлăвĕнче, грузсем тиесе пушатакан работниксен пухăвĕнче ĕçри çитменлĕхе пĕтерессипе, шалти резервсемпе туллинрех усă курасси çинчен тĕплĕн сӳтсе явнă. Çав пухусемпе канашлусенче рабочисем, инженерсемпе техниксем ĕçе лайăхлатма пулăшакан сĕнӳсем нумай панă.

Ĕç йĕркине тăрăх весовщиксем, составительсем, диспетчерсем, кассирсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçленинчен, кашни работник дисциплиннăллă, пуçаруллă пулнинчен нумай килет. Çакна асра тытса, партипе профсоюз организацийĕсем тата хуçалăх руководителĕсем работниксене коммунизмла воспитани пама, вĕсен пуçарулăхĕпе пултарулăхне ӳстерсе пыма, государство дисциплинине çирĕплетме тăрăшаççĕ. Составительсем, весовщиксем, диспетчерсем вагонсем ахаль тăрассине нормăпа палăртнинчен çур сехет чакарма социализмла обязательствăсем йышăнчĕç. Администраци, партипе профсоюз организацийĕсем çав пуçарăва ырларĕç, ăна пурнăçлама мĕн кирлине пурне те туса хатĕрлеме тăрăшрĕç. Администраци маневрсем тумалли çĕнĕ график турĕ, поездсене йышăнса ăсатас ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме палăртрĕ, клиентсемпе кашни уйăхра канашлусем ирттерме тытăнчĕ.

Партипе профсоюз организацийĕсем социализмла ăмăртăва ертсе пырас ĕçе вăйлатрĕç. Социализмла обязательствăсене мĕнле пурнăçланине тăташах тĕрĕслени, производствăлла канашлусем ирттерни, критикăпа самокритикăна сарни, юлса пыракансене малта пыракансемпе танлашма пулăшни — çаксем вĕсем пурте коллективăн творчествăлла вăйне ӳстереççĕ, çитменлĕхсемпе чăрмавсене çиеленчех пĕтерсе пыма пулăшаççĕ.

Уйрăмах А. Егоровпа П. Андреев составительсен пуçарулăхне палăртас пулать. Вĕсем ĕçе тытăниччен маневр тăвакан диспетчера тата весовщика чĕнсе илеççĕ те вагонсене груз тиеме хăвăртрах тăратасси, тиенĕ вагонсене мăн çул çине çийĕнчех илсе тухасси, маневрсене ăнăçлă туса ирттересси çинчен калаçса татăлаççĕ. Пĕр задание пурнăçласа çитерес умĕн çĕнĕ план илеççĕ. Çапла ĕçленипе вĕсем маневр тумалли хатĕрсемпе туллин усă кураççĕ, вагонсем ахаль ларнине чакараççĕ.

Чугун çул работникĕсен кунĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăрса тата автокарăпа, кранпа туллин усă курса, Кузнецов, Михайлова, Долгова весовщиксем, кран машинисчĕ Бруснигин, Перфильев стропильщик çак кунсенче задание 165 процент пурнăçларĕç. Вĕсем задание ирттерсе пурнăçлани ытти сменăсене тухăçларах ĕçлеме паха май туса пачĕ.

Станци дежурнăйĕсем Федотовпа Николаев юлташсем, маневр тăвакан диспетчерсем Алимовпа Филиппов юлташсем резерври пăравуссене ăсатнă чухне вĕсемпе пĕрле вырăнти вагонсене те ярасçĕ. Çапла туни вагонсен çаврăнăшне ӳстерет.

Пĕтĕм коллектив тăрăшса ĕçленипе станци государство планне тăташах ăнăçлă тултарса пыма тытăнчĕ, вагонсем ахаль тăнине чылай чакарчĕ. Кăçалхи июнĕн 27-мĕшĕнче вырăнти вагонсем вăтам шутпа 41,9 сехет ахаль тăнă пулсан, июлĕн 6-мĕшĕнче 20 сехет тăнă. Норма тăрăх вĕсен 21,1 сехет тăмалла. Июлĕн 4-мĕшĕнче вагонсем пурĕ те 18,8 сехет çеç ахаль тăнă. Ик-виç уйăх каярах вагонсем 39,4 сехет таран тăнă тĕслĕхсем пулнă.

Станцире усă курман резервсем сахал мар. Вĕсемпе туллинрех усă курни, клиентсем хушшинче государство дисциплинине çирĕплетни, коллективăн пултарулăхне ӳстерсе пыни станцие тата тухăçларах ĕçлеме май туса панă пулĕччĕ.

Вагонсем юсакан завод, вăрманпромхоз, Заготзерно пунккĕ вагонсем тиесе пушатмалли плана кăçал уйăхран уйăха тултармаççĕ, вагонсене нормăран ирттерсе 3—5-шер сехет ытлашши тытаççĕ. Вĕсен руководителĕсем государство дисциплинине пăсаççĕ. Июнĕн 30-мĕшĕнче вагонсем юсакан завода çĕр кăмрăкĕ тиенĕ вагонсем килнĕ. Икĕ вагона 66 сехет пушатмасăр тытнă. СССР Çул-йĕр министерствин строительствăпа монтаж кантурĕ, Чăвашпотребсоюзăн бази тата ытти хăшпĕр хуçалăх организацийĕсем те станцие ăнăçлă ĕçлеме сахал мар чăрмантараççĕ.

Чылай предприятисен ансăр чугун çул юппisem юсавлă мар. Хăшпĕр шпалсем çĕрсе юрăхсăра тухнă пулсан та вĕсене улăштармаççĕ, паха мар рельссем те сахал мар тĕл пулаççĕ. Япăх çулсем тăрăх вагонсем йĕркеллĕ çӳреймеççĕ, вагонсем йăванса кайнă тĕслĕхсем те пулкалаççĕ. Апла пулин те предприятисен руководителĕсем çула юсаттарма тăрăшмаççĕ.

Вагонсемпе тĕрĕс мар усă курни предприятисемпе организацисене хăйсене те пысăк сиен кӳрет. Груз тиесе пушатмалли çур çулхи плана тултарманшăн вагонсем юсакан завод 20 пин тенкĕ, вăрманпромхоз—15 пин тенкĕ ытла, Заготзерно пункчĕ—13 пин тенке яхăн штраф тӳленĕ.

КПСС Канаш хула комитечĕн предприятисемпе хуçалăх организацийĕсен руководителĕсем хушшинче государство дисциплинине çирĕплетмелле, чугун çул работникĕсем хушшинче партилле-политикăлла тата партилле-организацилле ĕçе вăйлатма пуçламăш парторганизацисене ытларах пулăшмалла.

Н. ГРИДАСОВ,
Канаш станци начальникĕн заместителĕ.

Чугун çул работникĕсен ăмăртăвĕ

УЛАТĂР. Депори машинистсем Чугун çул работникĕсен кунне ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн ăмăртаççĕ. Нумаях пулмасть Горбунов юлташ Улатăртан Красный Узел станцине нормăран ирттерсе 800 тонна груз тиенĕ поезда вăхăтра илсе çитернĕ. Коммунист Быков машинист тата пысăкрах çитĕнӳ тунă: нормăран ирттерсе 900 тонна груз тиенĕ поезда график тăрăх илсе çитернĕ.

Рожков машинист йывăр тиенĕ поезда графикпа палăртнинчен 25 минут маларах Красный Узел станцине илсе çитернĕ. Тихонов машинист тата ытти чылай машинистсем куллен паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Машинистсем хушшинче çĕр кăмрăкĕ перекетлессишĕн вăйлă ăмăрту пырать.

* * *

Çак кунсенче йывăç япаласем тăвакан мастерской пĕрене тиенĕ вагонсем килнĕ. Киреев юлташ ертсе пыракан грузчиксен бригади, электричество вăйĕпе ĕçлекен лебедкăпа лайăх усă курса, вагонсене нормăра палăртнинчен маларах пушатнă, сменăри нормăна 200 процент тултарнă. Çак бригадăри Лукишин, Демин, Лаврентьев грузчиксем ĕç нормине 300 процент таран тултараççĕ.

Ожигов юлташ ертсе пыракан грузчиксен бригади те ĕç нормине 350 процент таран тултарать.

«ЛЕНИНСКИЙ ПУТЬ» хаçатран.

Артель Уставне сĕмсĕррĕн пăсаççĕ

Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсакансене хирĕç хытă кĕрешме кирли çинчен татăклăн кăтартса панă. Ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсса ĕçлени колхоз стройне сиен кӳни пулать. Çакăн çинчен Ишлей районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз председателĕ С. Трофимов юлташ лайăх пĕлет, çапах та Устава сĕмсĕррĕн пăсса пырать.

Кăçал колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсене икĕ хутчен кăна ирттернĕ. Бригадăсенчи колхозниксен пухăвĕсемпе производствăлла канашлăвĕсене ирттермеççĕ. Колхоз правленийĕн ларăвĕсене те план тăрăх ирттермеççĕ, вĕсенче пĕчĕк ыйтусене çеç сӳтсе яваççĕ, чылай чухне вĕсем пирки те пулин тĕрĕс решенисем йышăнмаççĕ, йышăннă решенисене хут çинче çеç тăратса хăвараççĕ. Февралĕн 18-мĕшĕнче пулса иртнĕ ларура правлени членĕсем иртнĕ çулта фермăсенче вилнĕ выльăхсемшĕн айăплисене ответ тыттарма, тăкакне шырасă илме решени йышăннă. Анчах çак решенине паянхи куна та пурнăçламан.

Колхоз председателĕ С. Трофимов юлташпа колхоз бригадирĕсем И. Савельев, М. Трофимов транспорт инвентарĕсене колхоз витинче е килкартинче артель Уставĕнче кăтартнă пек тытса усрамалли йĕркене те пăсаççĕ. М. Трофимов ертсе пыракан 2-мĕш уй-хир бригадинче урапасемпе ут таврашĕсене халĕ те колхозниксен килĕнче усраççĕ. Çакна пула вара хăшпĕр колхозниксем суйталăкĕпех лашапа тумалли ĕçсене тума хутшăнаймаççĕ, çакăншăн кăмăлсăр пулаççĕ.

Колхозра ĕç дисциплини çирĕп мар. Ăна йĕркелес тесе пулас, колхоз руководителĕсем колхозниксене администрацилес çул çине тăнă. Правлени ларăвĕн протоколĕсене пăхсан, кунта Устава пăснă фактсене темĕн чухлех курма пулать.

Обществăлла хуçалăхри ĕç çине çиелтен пăхса ĕç дисциплинине пăсакансене колхоз правленийĕ ятлама, колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче сӳтсе явма, пĕр-пĕр ĕçрен тепĕр ĕçе лартма е 5 ĕçкунĕ таран штрафлама пултарать. Кунта çак йĕркене пăхăнмаççĕ. Колхоз председателĕ С. Трофимов пĕр-пĕр колхозник пĕчĕк айăп çеç турĕ пулсан та, хăй ирĕкĕпе, правлени ларăвĕнче çав колхозник çинчен сӳтсе явмасăрах, штрафласа хурать. Вăл хăй ирĕкĕпе колхозниксене штраф хумалли «распоряжени кĕнеки» тунă, çав кĕнеке çинче нумай колхозниксен ячĕсене çырса хунă. Кайран вара, чылай вăхăт иртсен, çав кĕнеке çине çырса хунă «штрафсене» правлени ларăвне çирĕплетме лартать. Правленин çак çулта пулса иртнĕ пĕр ларăвĕнче 8 колхозник çинчен хăйсене чĕнмесĕрех пăхса тухнă та председатель штрафланине çирĕплетнĕ. Кама тата мĕçе ĕçкунĕпе штрафласси çинчен те çырса хуман, кама мĕн чухлĕ штрафлани çинчен пĕлес пулсан, колхоз председателĕн «распоряжени» кĕнеки çине пăхма тивет. Анчах кунта вара ытлашши иртĕхнĕ фактсене сахал мар курма пулать. Акă, февралĕн 23-мĕшĕнче фермăра пĕр пăру апат çиме пăрахнă, ăна вара ирĕксĕрех пусмалла пулнă. Çакăншăн пăру пăхакан А. Однюшковăпа Емельяновăна 15-шер ĕçкунĕпе, ферма заведующине Трофимова 10 ĕçкунĕпе штрафланă. Çав кунах тепĕр ĕнене пăрулан чухне кирлĕ пек пулăшу паман, ветработниксене шыраса тупман тесе, ферма заведующине Трофимовах 5 ĕçкунĕпе тата 50 тенкĕ укçапа штрафланă. Çав куннех ăна правлени ларăвне пыманшăн та пĕр ĕçкунĕпе штрафламалла тунă. Колхоз председателĕ С. Трофимов правлени членĕсене айăпласинчен те именсе тăмасть. Правлени членне К. Степанова юлташа ларăва пыманшăн темиçе хутчен те ĕçкунĕпе штрафланă. Çавăн пекех ертсе пыракан ытти работниксене те сахал мар штрафланă.

Колхоз правленийĕ кĕрсен, хальхи вăхăтра Трофимовăн тăвата номерлĕ «распоряженийĕ» çакăнса тăнине курма пулать. Вĕсене вăл пĕр кун çиктерессĕр тенĕ пекех çырса пырать. Июлĕн 4-мĕшĕнче вăл Е. Матюхинăпа Т. Якимова колхозницăсене 5-шер ĕçкунĕпе, июлĕн 7-мĕшĕнче Г. Григорьевпа И. Иванов колхозниксене хăй çӳрекен тарантаса ыйтмасăр кӳлнĕшĕн 15-шер ĕçкунĕпе, июлĕн 9-мĕшĕнче утă çулма тухманшăн 16 колхозницăна 2-шер ĕçкунĕпе, июлĕн 10-мĕшĕнче Г. Григорьев колхозника тарантаса вăхăтра леçсе паманшăн 2 ĕçкунĕпе штрафласа хунă.

— Рекорд тăвать пирĕн председатель,—теççĕ кунти колхозниксем, Трофимовăн «распоряженийĕсене» вуласа. Хăшпĕрисем унпа сăмах хушса калаçма та хăраççĕ. Правлени членĕсемпе пуçламăш парторганизаци те çакăнпа килĕшсе лараççĕ. Районти ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕнче ĕçлекенсем Трофимов çакăн пек иртĕхнине курмаççĕ, унăн йăлăшĕсене тӳрлетмеççĕ.

Колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ Савельев юлташ колхозниксен дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе начар ĕçлет. Вĕсем хушшинче калаçусемпе докладсем ирттерессине йĕркелемен. Парторганизаци колхозниксен социализмла ăмăртăвне ертсе пымасть, колхозниксен сĕнĕвĕсене шута илсе пĕтĕçтермест. Ку тĕлĕшпе çакна асăнни те çителĕклĕ: колхозниксем çуркунне «Мичуринец» колхозпа социализмла ăмăртса ĕçлеме кăмăл тунă. Анчах колхоз правленийĕпе пуçламăш парторганизаци вĕсен сĕнĕвне шута илмен, ăмăрту договорне тата социализмла обязательствăсене халĕ те туса çирĕплетмен. Бригадăсем те ăмăрту тулашĕнче тăрса юлнă. Колхозра тăрăшса ĕçлекенсем сук мар. Вĕсем пур. Акă 62 çулхи Илья Однюшкова илер. Вăл хăйĕн арăмĕпе Анна Однюшковăпа пĕрле иртнĕ çулта 500 ĕçкунĕ тунă, кăçал та унтан кая тумасть. Халĕ те вăл уйра тăрăшса ĕçлет. Анчах лайăх ĕçлекен колхозниксене кунта хисеп хăми çинче, стена хаçачĕпе боевой листоксем çинче курма çук.

Колхозниксен ĕçкунĕсене ĕç кĕнеки çине вăхăтра çырса пыни те ĕç дисциплинине çирĕплетме пулăшать. Анчах çак колхозри 4 бригадиртан пĕр бригадир та ĕçкунĕсене вăхăтра шута илсе пымасть, ĕçкунĕсене ĕç кĕнеки çине 4—5 уйăх ĕнтĕ çырса паман.

— Советсен суйлавĕ иртнĕренпе эпир хамăрăн ĕç кĕнекине алла тытса курманха,—тесе ӳпкелешеççĕ колхозниксем.

Ялхуçалăх артель Уставне пăсса ĕçлени, колхозниксен хаклă сĕнĕвĕсене итлеменни тата вĕсене администрацилени çак колхоз хуçалăхпа политикăлла ĕçсенче юлса пырасси патне илсе çитернĕ. Артель выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пĕр выльăх енĕпе те тултарман. Çак хушăрах кăçал выльăхсем вилкелени те пур, ытларах чăх-чĕп вилнĕ. Государствăна çак çулшăн сĕт тăратмалли плана пурĕ те 67,8 процент, аш-какай тăратмалли обязательствăна 38,9 процент, çăмарта памалли задание 44,5 процент, çăм памалли плана 18,3 процент çеç пурнăçланă. Çур çул хушшинче кашни сăвакан ĕнерен пурĕ те 425 литр çеç сĕт суса илнĕ. Чăхсенчен çăмарта илесси те чакса пырать. Мĕншĕн тесен фермăсенче ĕçлекенсене час-часах улăштарса тăраççĕ, выльăхчĕрлĕхсене хупса усрамалли çуртсене çĕнĕрен лартмаççĕ, киввисене юсамаççĕ. Выльăх апачĕн çирĕп никĕсне тăвассине хакламаççĕ, ку таранччен те силос хывма тытăнман.

Колхоз правленийĕ уйри тырпулсене пухса кĕртме те япăх хатĕрленчĕ. Халĕ те ĕç планĕ туса çирĕплетмен, ялхуçалăх машинисемпе ытти ĕç хатĕрĕсене юсаса пĕтермен, государствăна тырă леçме транспорт бригади туман.

Ф. МАЛЫШКИН,
В. ЧЕРНОВ.

Польша халăхĕн аслă праçникĕ

Тăхăр çул каялла, 1944 çулхи июлĕн 22-мĕшĕнче, Наци ирĕке кăларас тĕлĕшпе тунă Польша Комитечĕ хăйĕн историллĕ Манифестĕнче Польша халăхне, Совет Çарĕпе тачă çыхăнса, тăван çĕршывран нимĕç фашисчĕсене хăваласа кăларассишĕн, никама пăхăнса тăман, халăх демократиллĕ Польша туса хурассишĕн кĕрешме чĕнсе каланă. Пĕтĕм çĕршывра çакăн пек чĕнӳ янраса кайнă:

«Çирĕп мирпе пурăнакан, ӳсĕмлĕ ĕç тăвакан тата чечекленсе аталанакан Польшăшăн кĕрешĕве çĕкленĕр. Çав Польшăна малашне нимĕçсем тапăнса кĕресси нихçан та хăратса тăмĕ». Польша халăхĕ çак куна Польшăна çĕнĕрен ура çине тăратса вăйлатмалли кун тесе ят панă.

Польшăри миллионшар патриотсем çав чĕнĕве чун-чĕререн ырласа кĕтсе илнĕ, вĕсем захватчиксене хирĕç кĕрешес ĕçре хăйсен вăйĕсене ӳстернĕ. Польша çĕрне Совет Çарĕн чаплă воинĕсем ирĕке кăларнă, вĕсемпе пĕрле Польша Çарĕн чаçĕсем те çапăçнă. Пĕрле пынă çак кĕрешӳре Совет Союзĕпе Польша хушшинчи никам аркатайми аслă туслăх çуралнă, вăл халăх Польшин вăй-хăвачĕпе ырлăхĕн çăлкуçĕ пулса тăрать.

Ирĕке тухнă Польша халăхĕ чаплă праçникне пысăк çитĕнӳсем тунишĕн савăнса кĕтсе илет, малашлăх тата та телейлĕрех пулассине вăл пĕр иккĕленмесĕр ĕненсе тăрать. Польшăри рабочисен пĕрлешнĕ партийĕ тата халăх правительстви ертсе пынипе республикăри ĕçсынисем хавхаланса социализмла çĕнĕ общество тăваççĕ. Совет Союзĕ тăташах пулăшса тăни социализм строительствине çирĕп шанчăк парса тăрать, Польша халăх республикине пĕтмелĕх малалла кайса пыма май парать.

«Польша халăхĕ,—тет Болеслав Берут,—пысăк хăвăртлăхсемпе çĕнĕ, социализмла наци пулса пырать. Историлле çак улшăнусенче совет халăхĕсен тăванла пулăшăвĕ, туслăхĕ тата примерĕ тĕп вырăн йышăнса тăрать, çав улшăнусем халĕ Польшăри халăх массисен хăватлă вăйне тата творчествăлла талантне вăратаççĕ».

Польшăри ĕçсынисем хăйсен çĕршывĕн строительствинче чăн-чăнах та питĕ пысăк çитĕнӳсем турĕç. Вĕсен пĕлтерĕшĕ пысăк пулнине тата çакна асра тытмалла: Польшăна вăрçă тата нимĕç фашисчĕсен оккупацийĕ питĕ сиен кӳнĕ.

Польшăра официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Польша халăх хуçалăхĕ, пĕрремĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнчи çухатусемпе танлаштарсан, материальнăй çухатусем виçĕ хут çурă ытларах тӳснĕ. Гитлерла захватчиксем 14 пин предприятие, 84 пин ремесла мастерскойне, 200 пин магазина, пиншер шкулсене культурăпа çутĕç учрежденийĕсене аркатса тăкнă. Халăхăн виçĕ пайран пĕр пайĕ çурт-йĕрсĕр тăрса юлнă; ялхуçалăхĕ юхăнса кайнă. Çаксем çумне тата акă мĕн хушмалла: вăрçăпа оккупаци çулĕсенче Польшăра ултă миллион çын ытла вилнĕ.

Буржуазипе помещиксен стройĕн условийĕсенче çав йывăр сурансене тӳрлетме нумай вуншар çул кирлĕ пулнă пулĕччĕ. Çĕршывăн чăн-чăн хуçийĕ пулса тăнă Польша халăхĕ вара халăх хуçалăхне юсаса ура çине тăратас задачăна питĕ кĕске срокра татса пачĕ. 1947 çулта йышăннă пĕрремĕш виçĕ çуллăх плана 2 çул та 10 уйăхра тултарнă. Ĕçсынисем тимлĕн тăрăшнипе пула промышленноспа ялхуçалăхне юсаса çитернĕ, çĕршывăн экономикине малалла аталантарма кирлĕ условисем туса хунă.

Польшăри рабочисен пĕрлешнĕ партийĕ тавра тачă пĕтĕçсе, Польша халăхĕ республикăна хăй суйласа илнĕ çултан пăрса яма хăтланнă шалти тата тулашри реакци вăйĕсене çапса аркатрĕ. Халăх пĕрлĕхĕ çултан-çул ӳссе тата çирĕпленсе пычĕ, вăл уйрăмах иртнĕ çулта Польша сеймне суйланă чухне усăмлăн палăрчĕ. Суйлавра Халăх фрончĕ чаплă çĕнтерӳ тунă. Çав çулах Польшăра çĕнĕ конституци йышăннă, вăл халăхăн аслă çĕнтерĕвĕсене çирĕплетсе панă, телейлĕ пурнăç тăвас ĕçре тата анлăрах майсем туса панă.

Кăçал Польша ултă çуллăх планăн тăваттăмĕш çулне кĕчĕ. Çав плана пурнăçласа, социализмăн экономикăлла çирĕп никĕсне хываççĕ. Халăх влаçĕ республикăра индустрие аталантарас ĕçе чи малти вырăна хурать. Ку тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсем çĕнĕ Польшăн тусĕсене хытă савăнтараççĕ.

1952 çулхи плана пурнăçа кĕртнĕ хыççăн промышленность производствин шайĕ вăрçă умĕнхинчен виçĕ хут ытла иртсе кайнă. Электроэнерги туса кăларасси—тăватă хут, çĕр кăмрăкĕ тата хурçă производстви виçĕ хут ӳснĕ. Польша халĕ Франци, Бельги тата Итали пĕрле кăларниччен ытларах çĕр кăмрăкĕ кăларать. Çĕршывăн тĕрлĕ районĕсенче çĕнĕ предприятисем нумай тунă, вăл шута машинăсем тăвакан заводсем те кĕреççĕ. Польша верфĕсем халĕ пысăк тинĕс судноисем туса кăларма тытăннă. Тракторсем тăвакан промышленность та вăйланса пырать, грузсем турттаракан тата çăмăл автомобильсем, электровозсем, токарнăй тата шлифовальнăй кăтăс станоксем, çавăн пекех ытти машинăсем туса кăларассине те йĕркелесе çитернĕ. Вĕсене халиччен урăх çĕршывсенчен илсе тăнă пулнă.

Ĕлĕк кая юлнă районсенче промышленность предприятийĕсем ӳсе-ӳсе лараççĕ. Акă, сăмахран, Краков воеводствинче ултă çуллăхăн гигантне—«Новая Гута» металлурги комбинатне тăваççĕ. Ăна ĕçе кĕртсен, Польша çулсерен татах пĕр миллион çурă тонна хурçă илсе тăма пултарать, вăрçăччен çĕршыври мĕнпур металлурги завочĕсем пĕтĕмпе те çавăн чухлĕ хурçă шăратса кăлараймаn. Çав воеводствăрах пысăк химии комбиначĕ, республикăри чи пысăк Явожно-2 электростанци, пысăк пир-авăр комбиначĕ, çĕр кăмрăк шахтисем т. ыт. те тăваççĕ.

Халăх демократиллĕ Польшăн строительствинче Варшавăна юсаса аталантарас тĕлĕшпе тăвакан анлă ĕçсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Строительсем тăрăшнипе пула Польша столици ишĕлчĕксене пĕтерсе пырать, çывăх çулсенчех вăл халичченхинчен те илемлĕрех хула пулса тăрĕ. Халех ĕнтĕ кунта пурăнмалли çуртсен, обществăлла çуртсен, культурăпа çутĕç тата наука учрежденийĕсен çĕнĕ кварталĕсем нумай тунă, сарлака та тӳрĕ магистральсем хывса тухнă, пысăк парксем туса йĕркеленĕ. Хула хĕрринчи йĕркесĕр пулнă вырăнсенче лайăх çуртсем, шкулсем, кинотеатрсем, клубсем ӳссе лараççĕ. Варшава йышăнакан лаптăка 144 тăваткал километртан 362 тăваткал километра çитерессĕ. Столицăн вăтаçĕрĕнче культурăпа наукăн И. В. Сталин ячĕпе тăракан Дворецне тăваççĕ, унăн çӳлĕшĕ 220 метр пулать. Çакă вăл Совет Союзĕ Польша халăхне панă парне пулса тăрать.

Капитализм чуралăхĕпе эксплуатацийĕнчен яланлăхах хăтăлнă Польша ĕçсынийĕсем хăйсен ултăçуллăхне пурнăçласишĕн питĕ пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Фабрикăсемпе заводсенче социализмла ăмăртупа ударничество анлăн сарăлать, производство новаторĕсен речĕ нумайланнăçемĕн нумайланать. Рабочисем, инженерсемпе техниксем ĕçĕн малта тăракан совет меслечĕсемпе ăнăçлăн усă курма вĕренеççĕ, ĕç тухăçлăхне ӳстерес, продукци ытларах туса кăларас тата унăн пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе питĕ паха çитĕнӳсем тăваççĕ.

Промышленность хăвăрт аталанни Польша ялхуçалăхне малалла вăйлатса пыма паха условисем туса парать. Халăх влаçĕ туса хунăранпа яла тĕрлĕ ялхуçалăх машинисемпе хатĕрсем нумай ярса панă, акакан çĕр лаптăкне ӳстерес, малта тăракан агротехникăна производствăна кĕртес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. 1949 çулта çĕршывра 30 машинатрактор станцийĕ пулнă пулсан, халĕ вĕсем 368 шутланаççĕ.

Польша ĕçхресченĕсем майĕпен социализмла шултра çĕрĕç çулĕ çине куçса пыраççĕ. Республикăра июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне производствăлла çĕрĕç кооперативĕсем 7.682 тунă, вĕсенче хăйсен ирĕкĕпе 157 пин хресчен хуçалăхĕ пĕрлешсе тăрать. Хресченсем практикăра çакна курса ĕненеççĕ: ĕçĕн коллективла формисем çинче никĕсленсе тăракан шултра çĕрĕçĕ пурнăçа пĕрмай лайăхлатса пыма май парать.

Халăх влаçĕ ĕçсынисен ӳссе пыракан материальнăй тата культура ыйтăвĕсене тивĕçтерме хытă тăрăшать. Рабочисен реальнăй ĕç укçийĕ, хресченсен тупăшĕ пĕрмаях ӳсет, куллен кирлĕ продуктсемпе таварсем туса кăларасси вăйланнăçемĕн вăйланать, хаксем йӳнелсе пыраççĕ, социальнăй обеспечени ĕçĕ лайăхланать. Правительство халăх сывлăхне сыхлама, кану çуртĕсемпе санаторисем, ача сачĕсемпе яслисем тума укçа нумай уйăрса парать.

Польша Халăх Республики культура строительствинче те пысăк çитĕнӳсем турĕ. Кивĕ Польшăра шкул çулне çитнĕ ачасем пĕр миллион ытла вĕренме пултараймаn. Халĕ çĕршывра пурне те вĕрентес ĕçе пурнăçланă, иртнĕ вăхăтран юлнă хут пĕлменлĕхе пĕтернĕ. Республикăри хуласемпе ялсенче пиншер çĕнĕ шкулсем, библиотекăсем, вулав çурчĕсемпе культура çурчĕсем туса лартнă, çĕнĕ аслă шкулсем, театрсемпе киносем уçнă. Хаçатсем, кĕнекесем, журналсем пысăк тиражпа тухса тăраççĕ, вĕсемпе халăх массисем анлăн усă кураççĕ. Сăмахран, çакă интереслă: вăрçă умĕнхи вăхăтпа танлаштарсан, Польшăра халĕ кăларакан кĕнекесен тиражĕ тăвата хута яхăн ӳснĕ.

Польшăра хуçалăхпа культурăн пур отраслĕсенче те малалла кайса пыни вăйлăн палăрса тăрать. Ултă çуллăх плана тултарни май, çĕршыва аталантарас тĕлĕшпе ĕçсынисем çĕнĕ çитĕнӳсем тăвĕç, çакă вăл обществăлла çĕнĕ строя тата та ытларах çирĕплетме, халăхăн пурнăçне лайăхлатса, культурине ӳстерсе пыма пулăшĕ.

Польша халăхĕ хăйĕн мухтавлă праçникне уявлать, вăл çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçре вăй-хăвата ӳстерсе пыма, тунă пысăк çитĕнӳсене çирĕп сыхласа тăма сăмах парать. Польша халăхĕ хăватлă демократи лагерĕнче мăнаçлă тăрать, миршĕн тата халăхсен хăрушсăрлăхĕшĕн активлă кĕрешет. Совет Союзĕпе туслă çыхăну тытни, халăх демократи çĕршывĕсемпе, Китай Халăх Республикипе килĕштерсе ĕçлени ирĕке тухнă Польша халăхне социализм строительствинче малашне те чаплă çитĕнӳсем тума май панине Польша халăхĕ лайăх курать.

Д. ДАНИЛОВ.

Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх çирĕпленет

ВАРШАВА, июлĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Çĕршывра Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин ялти организацийĕсене çирĕплетмелли уйăхлăх иртерĕ. Çак уйăхлăх паян вĕçленнĕ.

Уйăхлăх вăхăтĕнче ялсенче 8.200 вечер иртнерĕ, хресченсем фабрикăсемпе заводсен коллективĕсемпе тĕл пулнă тата ытти ĕçсене тунă. Пиншер ялсенче Совет Союзĕнчи ĕççыннисен пурнăçĕ çинчен тата мирлĕ строительство анлă сарални çинчен доклаçсемпе калаçусем иртерĕ.

Краков воеводствинче общество «СССР—мир тĕрекĕ» темăпа выставка организациленĕ, ăна курма халăх йышлă çÿренĕ. Ольштин воеводствинче ССР Союзĕнчи коммунизм строительствипе паллаштаракан куçса çÿрекен выставка тунă. Ополь воеводствинче «Варшаваăри Иосиф Сталин ячĕпе тăракан культурăпа наука дворецĕ» мĕнле пулмаллине кăтартакан выставка тата ытти çĕрте те çавăн пек выставкăсем пулнă.

Ченстохов районĕнчи Мокшеш ялĕнче ялти активистсен «Мичурин тата унăн науки» темăпа выставка организациленĕ. Июлĕн 19-мĕшĕнче çав ялта хресченсен пухăвĕ пулнă. Унта Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин Сталиногруд воеводствинчи уйрăмĕн миллионмĕш номерлĕ билетне панă. Çак паллă билета хресченсен пĕр-пĕрне пулăшмалли союзĕн активлă деятельне, Антони Валащик хресчене панă. Миллионмĕш номерлĕ билета панă кун Сталиногруд воеводствинче Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществине тата 8 пин çын ытла члена кĕнĕ.

Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин ялти организацийĕсене çирĕплетмелли уйăхлăх Польша хресченĕсем аслă совет халăхĕпе туслă пулнине тата совет халăхне чунтан-чĕререн хисепленине уççăн кăтартса панă. Уйăхлăх вăхăтĕнче обществăн çĕнĕ кружокĕсене 2.400 ытла организациленĕ, Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин членне 130 пин çын ытла илнĕ.

Польшăра хĕрсе тырă выраççĕ

ВАРШАВА, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăра хĕрсе тырă выраççĕ. Кăçал çĕршыв уй-хирĕсенче тракторсем, комбайнсем, тырă вырса çыхакан машинăсем, жнейкăсем тата ытти ялхуçалăх машинисем пĕлтĕрхинчен чылай нумайрах ĕçлеççĕ. Тырпул пухса кĕртмелли кампани пĕлтĕрхинчен йĕркеллĕрех пулса пырать.

Çĕршыва ирĕке кăларнине палăртмалли наци уявне тивĕçлĕн кĕтсе илессишĕн социализмла ăмăртăва хутшăнса, Польшăри хресченсем тырпула кĕске вăхăт хушшинче пухса кĕртессишĕн, çавăн пекех тата государствăна тырă срокчен парса татассишĕн кĕрешеççĕ.

Июлĕн 16-мĕшĕ тĕлне Познань воеводствинче ыраш акнă мĕнпур лаптăкран 90 процентне вырнă. Çĕрĕç кооперативĕсенчен нисĕрĕшне яхăн тата государствăн ялти хуçалăхĕсенчен 12-шĕ ыраш вырса пĕтернĕ.

Кăнтăрти чылай уездсенче тулă тата ытти çуртыррисене вырма пуçланă.

Ополь воеводствинче çĕрĕç кооперативĕсем 30 ытла малтанхи тырра хатĕрлев пунктне леçнĕ.

Китайра халăх представителĕсен вырăнти пухăвĕсенче ĕçлеме çынсем суйлаççĕ

ПЕКИН, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Хальхи вăхăтра Китайри нумай районсенче халăх представителĕсен вырăнти пухăвĕсенче пулмалли çынсене суйлаççĕ. «Жэньминьжибао» хаçат паян халăх представителĕсен вырăнти пухăвĕсен суйлавĕ Сычуань, Сикан, Гуйчжоу (Кăнтăр-Хĕвеланăç Китай), Фуцзянь (Хĕвелтухăç Китай), Цзянси, Гуандун (Центральнăй-Кăнтăрти Китай), Ляодун тата Гирин (Çурçĕр-Хĕвелтухăç Китай) провинцийĕсенче пуçланни çинчен пĕлтернĕ. Ытти провинцисенче суйлава хатĕрленес енĕпе ĕçлеççĕ.

Суйлав умĕнхи кампание пиншер пропагандистсемпе агитаторсем хутшăннă. Вĕсем халăха суйлав законĕ çинчен ăнлантарса параççĕ.

Халăх представителĕсен вырăнти пухăвĕсене суйлама халăх, уйрăмах, хĕрарăмсем активлă хутшăнаççĕ.

Суйлав иртекен районсенче халăх представителĕсем пулма суйланисем хушшинче ĕçхĕрарăмĕсем нумай. Сычуань провинцийĕнчи Вэноцзян тата Лучжоу районĕсенчи халăх йышлă пурăнакан тăвата пысăк ялта тата ытти 19 ялта 813 çынна халăх представителĕсем пулма суйланă, вĕсем хушшинче 175 хĕрарăм.

Китайра шоссе çулĕсем тăваççĕ

ШАНХАЙ, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Вэньхуэйбао» хаçат Китайра шоссе çулĕсем туни çинчен пĕлтерет. Хаçат çырнă тăрăх, çĕршыва ирĕке кăларнă кунтанпах шоссе çулĕсем тăвас ĕç анлă саралнă. 1949 çулта унччен çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ шоссе çулĕсенчен 40 пин километрне ытла юсаса йĕркеленĕ. Çÿреме юрăхлă шоссе çулĕсен тăршшĕ 1952 çулта пĕтĕмпе 112 пин километр ытла пулнă, çав çулсенчен чылайăшне çĕршыв ирĕке тухнă хыççăн тунă.

Шоссе çулĕсем нумайланса пыни Китайăн чи инçетри вырăнĕсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарма тата хулапа ял хушшинче суту-илÿ тăвас ĕçе вăйлатма пулăшать.

Италири коммунистсен партийĕпе социалистсен партийĕн влиянийĕ ÿсет

РИМ, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ хаçатсем Италири коммунистсен партийĕпе социалистсен партийĕн влиянийĕ ÿсни çинчен пĕлтереççĕ. «Унита» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Кампанья облаçĕнче коммунистсен партийĕн членĕсен хисепĕ, 1952 çулхипе танлаштарсан, 8.061 çын чухлĕ ÿснĕ.

Суйлав иртнĕ хыççăн Римра коммунистсен партине 2.979 çын, çав шутра 1.200 хĕрарăм кĕнĕ.

«Аванти» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, юлашки кунсенче социалистсен партине пин çын ытла кĕнĕ.

БРАЗИЛИРИ ЗАБАСТОВКĂСЕМ

МОНТЕВИДЕО, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). «Коррейо да Манья» хаçат июлĕн 15-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ: Сантос хулинче (Бразили) трамвай çулĕ çинче ĕçлекен рабочисен пĕтĕмĕшле забастовки пуçланнă. Рабочисем ĕç укçи ÿстерме ыйтаççĕ.

«Импренса популар» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Санто-Андре хулинчи (Сан-Пауло штачĕ) металлурги заводĕнче ĕçлекен 800 рабочи забастовка тăвать.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНАЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ çакăн çинчен пĕлтернĕ: халăх çарĕсем иртнĕ кун хушшинче тăшмана хирĕç кăштах пĕр вырăнсенче çапăçнă.

Тушань утравĕ çинче гоминданăн бандичĕсене аркатса тăкнă

ПЕКИН, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Фучжоуран Тушань утравĕ çинче гоминданăн бандичĕсене аркатса тăкни çинчен пĕлтернĕ. (Çав утрав Китайăн кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи çыранĕ çывăхĕнче, Фуцзянь провинцийĕпе Гуандун провинцийĕ хушшинче вырнаçнă—Ред.).

Июлĕн 16-мĕшĕнче, ирхине 5 сехетре, гоминдановецсем 10 пин çын ытла Тушань утравĕ çине пырса кĕнĕ. Вĕсене самолетсем тата тинĕсри карапсем пулăшса тăнă. Çав вăхăтрах утравăн çурçĕр пайне тăшманăн парашютисчĕсем 200 çын ытла аннă.

Тăшман çарĕсем утрав çине ансанах, вĕсене хупăрласа илес тĕлĕшпе халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен çар чаçĕсем пысăк операцисем пуçласа янă. Тăшмана аркатса тăкас ĕçе утрав çинчи милици тата халăх хутшăннă. Çав кунах тăшманăн парашютисчĕсене пурне те пĕтерсе тăкнă. Халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен çар чаçĕсем унтан тăшман десантникĕсене пĕтерес тĕлĕшпе çапăçма тытăннă, вĕсене пысăк çухатусем кÿнĕ.

Июлĕн 17-мĕшĕнче, каçхине 7 сехет тĕлне, тăшмана пĕтĕмпех аркатса тăкнă. Чан Кай-ши бандичĕсенчен 2.664 çынна вĕлернĕ е амантнă, 715 çынна тыткăна илнĕ. Тăшманăн десантсем антармалли пысăк мар суднисене виççĕшне шыва путарнă, икĕ самолетне персе ÿкернĕ. Халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен çар чаçĕсем 109 пулемет, икĕ тупă, 60 миллиметрлă 26 миномет, винтовкăсем тата ытти йышши хĕçпăшалсемпе çар материалĕсем нумай тытса илнĕ.

Халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен çарăн тинĕс çыранĕсене хÿтĕлекен чаçĕсен ячĕпе тата утрав çинчи халăх ячĕпе телеграммăсем нумай пыраççĕ. Çав телеграммăсенче вĕсене тăшмана çĕнтернĕ ятпа саламлаççĕ. Çавăн пекех вĕсем патне парнесем нумай ярса параççĕ.

Паян Китайри Коммунистсен партийĕн Фуцзянь провинцийĕнчи комитечĕн, провинцири халăх правительствин, демократиллĕ тĕрлĕ партисемпе халăх организацийĕсен делегацийĕ утрава хÿтĕлекенсене тав тума Тушань утравĕ çине тухса кайнă.

ГОЛЛАНДИРИ МИР СОВЕЧĔ «ЕВРОПА ÇАРĔ» ÇИНЧЕН ТУНĂ ДОГОВОРА СÿТСЕ ЯВМА ТĂХТАМА ЫЙТАТЬ

ГААГА, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Де Ваархейд» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Голландири мир совечĕ Голланди парламенчĕн иккĕмĕш палатин председателĕ патне телеграмма янă, унта çапла каланă:

Сентябрь уйăхĕнче тăвата державăн конференцийĕ пулса иртиччен «Европа çарĕ» çинчен тунă договора сÿтсе явмалла мар тесе çине тăратпăр. Парламентăн Германи ыйтăвне мирлĕ майпа йĕркелеме чăрмантаракан нимĕнле ĕç те тумалла мар.

Пĕтĕм Индири мир совечĕн сессийĕ

ДЕЛИ, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Июлĕн 17-мĕшĕнче Патна хулинче (Бихар штачĕ) пĕтĕм Индири мир совечĕн сессийĕ уçăлнă. Пĕтĕм Индири мир совечĕн генеральнăй секретарĕ Ромеш Чандра Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Будапештри сессийĕн ĕçĕсем çинчен доклад тунă. «Пĕтĕм тĕнчери мир вăйĕсем çапла тума тăрăшаççĕ: тавлашуллă пур ыйтусем пирки те аслă державăсем пĕр-пĕринпе калаçса татăлса килĕшÿ тучăр, çапла вара çирĕп тата вăраха пыракан мир туса хучăр»,—тенĕ Чандра.

Пĕтĕм Индири мир совечĕн вице-председателĕ Сардар Гурбакш Синг сессире резолюци вуласа панă, унта пĕтĕм Индири мир совечĕн председательне Китчлу доктора «Халăхсем хушшинчи мире çирĕплетнĕшĕн» паракан тĕнчери Сталинла премипе наградăланă пирки Индири пĕтĕм халăх хавасланни çинчен каланă. Çак резолюцие делегатсем ура çине тăрса, тăвăллăн алă çупса, пĕр шухăшлă пулса ырланă.

Çакăн çине ответлесе, Китчлу доктор çапла каланă: мана «Халăхсем хушшинчи мире çирĕплетнĕшĕн» панă тĕнчери Сталинла преми вăл пĕтĕм Инди халăхне панă преми пулать.

«Империализм вăйĕсем Инди территорийĕнче вăрçă сарма хăтлансан, вĕсене хирĕç пĕтĕм çĕршыв кĕрешĕ...», тенĕ Китчлу. Çак сăмахсене сесси делегачĕсем тăвăллăн алă çупса ырланă.

Инçет Хĕвелтухăçĕнчи лару-тăру пирки Китчлу çапла каланă: «Ли Сын Ман Корейăпа Китайăн тыткăнри çар çыннисене салатса янă пулсан, вăл çавна США ырламасăр тума пултарайман; Чан Кай-ши Бирма çине тапăннă пулсан, вăл çавна США ырламасăр тума пултарайман».

«Совет Союзĕ мирлĕ пурнăç тăвасшăн, çав вăхăтрах США тĕнчере çĕнĕ вăрçă пуçласа яма тăрăшать», тенĕ Китчлу. Хăйĕн сăмахне вĕçлес умĕн Китчлу Инди правительствин политикине ырланă, премьер министр Неруран пĕтĕм тĕнчери мире хÿтĕлессишĕн тата тавлашуллă мĕнпур ыйтусене татса пама аслă державăсен конференцине пухмалла тăвассишĕн хытă тăрăшма ыйтнă.

Пенджабри поэт Мохан Синг резолюци вуласа панă. Унта Мир ĕçне пысăк усă паракан произведенисемшĕн Мульк Радж Ананд писателе Пĕтĕм тĕнчери мир премийĕпе наградăланă май саламланă. Хăйне саламланине хирĕç ответлесе, Мульк Радж Ананд сăмах тухса каланă.

Власра тăракан партин ватă членĕ Сундерлал çапла каланă: пĕтĕм тĕнчери мире хÿтĕлес ыйту енĕпе пĕтĕм Индири мир совечĕпе Неру правительстви хушшинче ăрасна шухăшсем çук. Неру Лондонра тунă заявленире Совет Союзĕ те, Китай та вăрçасшăн мар пулни çинчен каланă. Пĕр США анчах çĕнĕ вăрçă пуçласа яма тăрăшать. «США Китай çине тапăнсан, çакă вара Индишĕн тÿрремĕнех хăрушлăх тухса тăни пулать», — тенĕ Сундерлал. «Атомлă пиншерĕ бомбăсем пулăшнипе те США Азие парăнтарма пултараймĕ», тесе каласан, унăн сăмахне сесси делегачĕсем алă çупса ырланă.

Демократиллĕ Германи Республикин правительстви калаçусем иртерес пирки тунă заявление Хĕвеланăç Германири прогрессивлă хаçатсем ырлаççĕ

БЕРЛИН, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Германи Республикин правительстви Хĕвелтухăç Германири нимĕçсемпе Хĕвеланăç Германири нимĕçсем хушшинче килĕшÿ тăвас тĕлĕшпе калаçусем иртерме сĕннине Германин хĕвеланăç пайĕнче пурăнакан патриотла шухăшлă мĕнпур нимĕçсем чунтан-чĕререн ырлаççĕ.

Демократиллĕ Германи Республикин правительствин мирлĕ çĕнĕ пуçарăвне Хĕвеланăç Германири прогрессивлă хаçатсем мире тĕреклетес тата Германи пĕрлĕхне тăвас тĕлĕшпе пуçарнă çĕнĕ паха ĕç тесе шутлаççĕ.

«Фрейес фольк» хаçат, Демократиллĕ Германи Республикин правительствин сĕнĕвне ырласа, çапла çырать: «Нимĕçсем хăйсем килĕшÿ туни Германи ыйтăвне мирлĕ майпа йĕркелес тата тăвата державăн конференцине пухас тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнчере тăрăшас ĕçре витĕмлĕ пулăшни пулĕччĕ. Аслă державăсем Германи ыйтăвне мирлĕ майпа йĕркелеччĕр тесе чăннипех те ĕмĕтленекен кашни çынăн халĕ пĕтĕм Германири нимĕçсем килĕшÿ тăвассине текех чăрмантарса тămалла мар».

«Штутгартер фольксштимме» хаçат Демократиллĕ Германи Республикин Министрĕсен Совечĕн сĕнĕвĕ пирки çапла çырать:

«Демократиллĕ Германи Республикин правительствин заявленийĕ пирки рядовой çынсем калаçнинчен çакă курăнать: вĕсем çав заявление савăнăçлăн кĕтсе илнĕ. Демократиллĕ Германи Республикин правительствипе канашламасăр Германие пĕрлештерес пирки калаçусем иртерме май килмест».

Ганноверта ĕлĕк Гитлер çарĕнче пулнă çынсен слĕчĕ пулнă

БЕРЛИН, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Форвертс» хаçатăн паянхи пĕлтерĕвĕнче çакăн çинчен каланă: июлĕн 18-мĕшĕнче Ганноверта ĕлĕк фашистла çарта салтаксем пулнă çынсен слĕчĕ пухăннă. Слĕтăн тĕллевĕ Хĕвеланăç Германие çĕнĕрен хăвăртрах милитаризацилеме тата Бонра «Европăри оборона пĕрлешĕвĕ» çинчен тунă тата çирĕплетнĕ договора пурнăçлама пулăшасси пулать, тесе çырать хаçат. Çак пухура вице-канцлер Блюхер тухса каланă. Вăл Франциe хăратса каланă. «Францие «Европăри оборона пĕрлешĕвĕ» çинчен тунă договор çумне май килнĕ таран хăвăртрах тата ирĕксĕрлесех пĕрлештерме пур майсемпе тăрăшас пулать», тенĕ вăл.

Францири ĕççыннисем производствăна чакарнине хирĕç кĕрешеççĕ

ПАРИЖ, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Мальври (Од департаменчĕ) кÿкĕрт кăлармалли шахтăн администрацийĕ нумай пулмасть шахта «усăллă мар» текен сăлтавпа пĕр шахтăна хупма йышăннă. Чăннипе вара тĕп сăлтав çапла: Франци промышленникĕсен уйрăм ушкăнĕсемшĕн урăх çĕршывсенчен кÿкĕрт кÿрсе килни, ăна Францире сутăн илнинчен усăллăрах. Çавна пула кÿкĕрт кăлармалли шахта хупма шутлаççĕ.

Хăйсене ĕçрен кăларни çинчен пĕлтерсен, шахтăри рабочисем администраци хушнипе килĕшмен, шахтăна йышăннă. Шахтерсем çавăн пек тунине пĕтĕм халăх ырланă.

«Юманите» хаçат çакăн çинчен пĕлтерет: ĕнер шахтăра митинг пулнă. Унта тухса калакансем пурте администраци шахтăна хупма йышăннине хирĕç хытă протестленĕ.

Мускава кайса килчĕç

КУСЛАВККА. Пĕрремĕш ялтам шкулти 6—8-мĕш классенче вĕренекен 13 ача Мускава экскурсие кайса килчĕç. Столицăра экскурсантсем В. И. Ленин музейĕнче, И. В. Сталина панă парнесен музейĕнче, политехнически музейра, Мускава реконструкциленин историне кăтартакан музейра, планетарипче тата зоопаркра пулнă. Унсăр пуçне вĕсем Ленин сăртĕнчи университет суртне, Хĕрлĕ площадьпе Кремле пырса курнă; ачасем Центральнăй театрĕнче пулса, «Пурнăç çулĕ» спектакль пăхнă, стереокинора пулнă. Шкул ачисем çавăн пекех Алма-Атаран, Ташкентран, Улан-Удэрен тата ытти çĕртен экскурсие пынă ачасемпе тĕл пулса калаçнă.

Киле Мускав—Атăл канал тăрăх пăрахутпа таврăннă. Щербаковски гидроэлектростанцире тата Горький хулин паллă вырăнĕсенче пулнă вырăссен аслă писателĕн М. Горькин ачалăхне кăтартакан музея кĕрсе курнă.

Ку шкулта вĕренекен ачасен тепĕр ушкăнĕсем Хусанта, Шупашкарта пулнă, хăйсен районне курса вĕренес тĕлĕшпе походсем иртернĕ.

(Хамăр инф.).

Вулакансен йышĕ ÿсет

ЕЛЧĔК. Çĕнĕ Пăва ялĕнчи библиотекăран кĕнеке илсе вулакансен хисепĕ тăтăшах ÿссе пырать. Хальхи вăхăтра вулакансем 410 çын шутланаççĕ. Вĕсем хушшинче ялти активистсемпе колхоз ĕçченĕсем нумай. Акă, Ф. Тохторов колхозник кашни уйăхрах 7—8 кĕнеке илсе вулать.

Библиотека вулакансен конференцийĕсене иртерет.

В. НАУМОВ.

Çамрăк фельдшер-акушерсем

Канашри фельдшер шкулĕнче тăваттăмĕш курсра вĕреннĕ студентсем экзаменсене ăнăçлă пачĕç. 98 вĕренекен фельдшер-акушер ятне илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Нумаях пулмасть çамрăк специалистсем вĕренсе тухнă ятпа шкулта савăнăçлă пуху пулчĕ. Унта вĕренсе тухнисем дипломсем илчĕç.

В. ПАВЛОВ.

Витесем тăваççĕ

ШĂХАСАН. Сталин ячĕпе тăракан колхозра обществăлла çурт-йĕр нумай тăваççĕ. Пĕлтĕр колхозри строительство бригади 100 ĕне валли, пин чăх-чĕп валли витесем туса лартнă. Кăçал та строительство ĕçĕсем анлă саралса пыраççĕ. Нумаях пулмасть гараж туса лартрĕç. Кунсăр пуçне сысна вити, тимĕрçĕ лаççи тата кормокухня тума тытăннă. Çавăн пекех колхозра водопровод тума пуçланă.

А. МИХАЙЛОВ.

ПАЯН «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» ХАÇАТРА

Умстатья.—Вăйлă тырпула кĕске срокра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртер.

Тырă вырма тытăнма кая юлмалла мар! Тăван çĕршывра.

Шăхасан районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозри агитколлективăн ĕçри опычĕ çинчен.

Совет Союзĕпе Израиль хушшинче çĕнĕрен дипломатилле çыхăнусем тытмалла тунă.

СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствинче.

В. Сергеев. — Ялхуçалăх ĕçченĕсене медицина тĕлĕшпе лайăх пулăшу парса тăрассишĕн.

Н. Бурмистрова. — Обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăхлатар.

Д. Данилов. — Польша халăхĕн аслă праçникĕ.

Вырăнти тата урăх çĕршывсенчен килнĕ хыпарсем.

Врач канашĕсем

Пĕчĕк ачасене вар-хырăм чирĕсенчен мĕнле сыхламалла

Пирĕн çĕршывра пĕчĕк ачасене те, çитĕннĕ çынсене те вар-хырăм чирĕсенчен сыхласа хăварма пур условисем те çителĕклĕ. Асăннă чир-чĕрсемпе кĕрешес ĕç ăнăçлă пулса пытăр тесен, ача-пăча ашшĕ-амăшĕсен çав чирсем мĕнрен пуçланса кайма пултарнине тата вĕсемпе мĕнле кĕрешмеллине лайăх пĕлсе тămалла.

Варвитти чирĕпе пĕчĕк ачасем çитĕннĕ çынсенчен ытларах чирлеççĕ. Пĕчĕк ачасем чирлекен мĕнпур чирсенчен ытларах тĕл пулаканни—варвитти чирĕ. Ача мĕн чухлĕ çамрăкрах, ушăн вар-хырăм чирĕсемпе чирлес хăрушлăх та пысăкрах, вăл тата аслăрах ачасенчен йывăртарах чирлет.

Вар-хырăм чирĕсемпе ачасем çуркунне, çулла тата кĕркунне ытларах чирлеççĕ. Пĕчĕк ачасем час-часах çак чирсемпе чирлени вĕсен пыршисем çителĕклĕ аталанса çитейменнинчен тата пуç мимин çиелти сийĕнчи организма йĕркелесе тăракан центрсем çирĕпленсе çитейменнинчен килет. Ачана апат йĕркеллĕ çитермесен, вăл пурăнакан çĕрти температура кирлĕ пек пулмасан, ача тĕрлĕ чирпе, уйрăмах вар-хырăм чирĕпе, чирлеме пултарать. Ачасем ниирен ытларах диспепсипе тата юнлă варвиттипе (дизинтерия) чирлеççĕ.

Диспепси вăл—ăшра апата ирĕлтерекен органсем йĕркеллĕ ĕçлеме пăрахни. Çавăн пек чухне вара варвитти пуçланать. Диспепсипе чирленĕ ача начарланса, имшерленсе каять, вăл канăçсăрланма пуçлать, апат начар çиет, унăн йывăрăшĕ те хушăнма пăрахать. Хăш чухне çавăн пек варвиттиллĕ ача хăсма та тытăнать. Шыв е сĕт ĕçмессерен ача час-часах хăсни — унăн чирĕ йывăрланса пынине пĕлтерет. Варвитти тата хăсасси вăйланса пынине пула, ача йăлтах улшăнса каять. Вăл кулма та, калаçкалама та пăрахать, унăн куçĕсем путса кĕреççĕ, куçĕсем тавра кăвакарнă ункăсем пулса юлаççĕ.

Варвитти чирĕ ачасене питĕ начарлатса хăварать, çавăнпа вара унпа чирленисем чирĕ иртсе кайсан та часах тĕреклесе çитеймеççĕ, вĕсен йывăрăшĕ майĕпен кăна хушăнса пырать.

Юнлă варвитти—ересен чир шутланать. Вăл чирпе чирленĕ ача час-часах (талăкра 15—20 хутчен те) тула тухма тытăнать. Унăн каяшĕпе пĕрле лăймака тата юн пайлисем тухаççĕ. Ача час-часах тула тухасшăн мекĕрленме тытăнать, анчах унăн каяшĕ питĕ сахал тухать.

Чиртен сывалма йывăр, чирлессинчен малтанах сыхланма çăмăлтарах, çавăнпа та чир-чĕрсем мĕнле сăлтавсене пула пуçланнине пĕлсе тăни пирĕн ачасен сывлăхне упраса хăварма пулăшать.

Ачасене пĕр çулталăк тултаричен кăкăр сĕтĕнчен уйăрмалла мар, мĕншĕн тесен вăл пĕчĕк ача организмĕшĕн чи паха апат пулса тăрать. Кунсăр пуçне вăл — чи таса апат, мĕншĕн тесен ăна ача тÿрех кăкăртан ĕмсе илет, нимĕнле микробсемпе те вараланма памасть. Кăкăр сĕчĕ ача организмне кирлĕ. Вăл ачана тĕрлĕ чир-чĕрсенчен сыхланма пулăшакан тĕрлĕ япаласемпе пуян. Çавăнпа ĕнтĕ кăкăр сĕчĕпе пурăнакан ачасем варвиттипе сахалтарах чирлеççĕ. Кăкăр сĕтне ытлашши çисен те ачасем сайра хутра кăна варвиттипе чирлеççĕ, анчах вĕсем ĕне е качака сĕтне хăйсене кирлĕ нормăран ытларах çисен, варвиттипе часах чирлеме пултараççĕ.

Ачана çитерме юраман ытти апат-çимĕçсем те диспепсипе чирлеме пулăшаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсене ача организмĕ ăшра ирĕлтерсе пĕтерме пултараймасть.

Хăш чухне ачасене çитĕннисем апатланнă вăхăтра сĕтел патне илсе пыраççĕ те, «тутанса пăх-ха» тесе, какай, колбаса е хăяр таткисем параççĕ. Кун пек чухне ашшĕ-амăшĕсем ачана панă пĕр таткă апат ăна нимĕнле сиен те кÿмĕ тесе шутлаççĕ, анчах час-часах çавăн пек тусан, ача аллине мĕн лекнĕ, çавна çăвара чикме вĕренет. Унăн аллинчи япалана туртса илсен, вăл макăрма тытăнать. Çакă вара ачасемшĕн питĕ сиенлĕ япала, мĕншĕн тесен вĕсем, ашшĕ-амăшĕсем асăрхаман чухне, тĕмĕнле япалана та илсе хыпаççĕ, варвитти чирĕпе чирлеме пултараççĕ.

Пĕчĕк ачасем тĕрлĕ япаласене: апат-çимĕç таткăсене, хăйсем выляакан япаласене, ĕмкĕчсене, пÿрнисене, хăйсене чĕркенĕ е тăхăнтарнă тумтирсене ĕмме юратаççĕ. Çавсем урлă микробсем ача организмне лекеççĕ. Çавăнпа та ача-пăча тавраш ĕнчи япаласене, уйрăмах резинăран тунă ĕмкĕчсене (пустушкăсене) яланах таса тытмалла, вĕсем çĕре ÿкнĕ пулсан е урăх çĕрте вараланма пултарнă пулсан, вĕсене вĕри шывпа лайăх çумасăр ачана памалла мар.

Юнлă варвиттипе çитĕннĕ çынсем те чирлеççĕ. Чирлĕ çын ачасемпе пĕрле пурăнать пулсан, унăн чирĕ вĕсене те ерет. Çапла вара чирленĕ çынна ачасенчен çийĕнчех уйăрмалла та пÿлĕмри пур япаласене те дезинфекци тумалла, ун пек тума май килмесен, чирлĕ çыннăн питĕ сыхланса пурăнмалла, сыввисемпе хутшăнмалла мар.

Юнлă варвитти шăнасем урлă саралма пултарать. Шăнасем уборнăйсенче тата ытти таса мар вырăнсенче çÿресе, хăйсен урисемпе сăмсисем çумне питĕ нумай микроб пухаççĕ. Çав шăнасем савăт-сапа, вылямалли япаласем, апат-çимĕç çине ларса, вĕсене микробсемпе вараласа хăвараççĕ. Çавсем урлă вара ачасене юнлă варвитти ерет.

Вар-хырăм чирĕсемпе чирлесси ачана çуллахи вăхăтра ытлашши ăшă чĕркенинчен те, йывăр та пăчă сывлăшлă пÿлĕмре усранинчен те нумай килет. Ун пек тусан, ача питĕ тарлать. Çакă вара апата ирĕлтерме кирлĕ сĕткенсен тытăмне (составне) улăштарать. Çавна пула ăшри апат лайăх ирĕлеймест, вара ăчан варвитти пуçланать.

Пĕр-пĕр инфекциллĕ чир хыççăн начарланса юлнă, рахитпа чирлĕ, çавăн пекех кăкăр сĕтĕнчен вăхăтсăр уйăрнă ачасем часах чирлеме пултараççĕ. Çавăнпа пĕчĕк ачасене питĕ лайăх пăхса 5—6 уйăх хушши кăкăр сĕчĕпе кăна усрамалла, ун хыççăн вара врач хушнă тăрăх урăх йышши апат çитерме юрать. Ачасене кăкăр сĕтĕнчен уйăрма пуринчен ытла çуллахи вăхăтра хăрушă, çавăнпа ĕнтĕ ача çуллахи вăхăтра çулталăк тултарать пулсан, ăна сивĕсем пуçланиччченех кунне икшер хут кăкăр ĕмĕртмелле. Ĕмĕртес умĕн амăшĕн хăйĕн аллисене те, кăкăрне те вĕретнĕ шывпа çумалла. Ачана çитермелли пахча çимĕçсене вĕри шывпа вĕрилесе илмелле. Ача аллисене те кашни апат умĕнех çумалла, унăн чĕрнисене касса тата тасатса тămалла, мĕншĕн тесен вăрăм чĕрнесем айне таса мар япаласем пухăнма пултараççĕ. Ача пурăнакан пÿлĕме яланах таса тытмалла, час-часах уçăлтармалла, урайне тата вылямалли япаласене кашни кунах таса нÿрлĕ тутăрпа сăтăрса илмелле, шăнасене пĕтермелле.

Ачана хĕвел çинче врач хушнă чухлĕ кăна тытма юрать. Çуллахи вăхăтра ăна шлапар тата шурă тĕслĕ тумтир, шурă калпак тăхăнтартмалла. Шăрăх вăхăтра ачана вĕретнĕ шыва сивĕтсе ĕçтермелле.

Ача ашшĕ-амăшсен ачисемпе пĕрле консультацисене çÿремелле. Ашшĕ-амăшсен, врачсем вулакан лекцисене итлемелле, ачасене мĕнле пăхса ÿстермелли çинчен çырнă кĕнекесем вуламалла, врачсем хушнине тĕрĕс пурнăçласа пымалла.

Врач М. СЕРГЕЕВА.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — **Мари АССР-ĕнчи Шкетан ячĕпе тăракан вырăсла драма театрĕн гастролĕсем.** Июлĕн 22-мĕшĕнче **«Ксения»** (4 пайлă пьеса) июлĕн 23-мĕшĕнче—**«Грушенька»** (Лесковăн «Очарованный странник» повеçĕ тăрăх çырнă 4 пайлă драма).

Спектакльсем 20 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

КИНО

«РОДИНА»—июлĕн 22-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче **«Чапаев»**.

1953 ÇУЛХИ АВГУСТ УЙĂХĔН 1-мĕшĕнчен ПУÇЛАСА ИЛСЕ ТĂМА
„КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ“
хаçат çырăнса илĕр.

Хаçат-журнал илсе тăма «Союзпечать» уйрăмĕсенче тата кашни почтăра çырăнма пулать. Письмоносецсем гражданĕсен килĕсенче, хаçат-журнал сарма уйăрнă çынсем — заводсемпе фабрикăсенче, учрежденисенче, шкулсенче, колхозсемпе МТС-сенче подписка йышăнаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-04, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01188 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Тираж 20,000 экз.